к84.09(=Чув)
К27
4-45586

Марина Карягина

# КĔМĔЛ ТУМЛĂ ÇАР



Национальная библиотека ЧР
4-045586

К84.09(=Чув)
К27

Марина Карягина

# Кĕмĕл тумлă çар

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2012

(8 Чув) 80 дЗ К24 К 84.09(=Чув)6-61

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-6 61
К 24

**Карягина М.Ф.**
**Кĕмĕл тумлă çар.** Сăвăлла трагеди. – Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2012. – 84 с., ил.

ISBN 978-5-4246-0144-6

Ч-45586
Проверено 8 СЕН 2017
Национальная библиотека Чувашской Республики

ISBN 978-5-4246-0144-6 © Карягина М.Ф., 2012

## Ум сăмах вырăнне

"Кĕмĕл тумлă çар" сăвăлла трагеди – философилле тарăн шухăшлă хайлав. Ăна ай-хай тиркевлĕ куçпа пăхса хакласан та вăл чăн-чăн трагеди жанрĕн пулса çитнĕ тĕслĕхĕ теме пулать. Ахальтен мар пьесăна Çамрăксен театрĕ чăваш драматурги çĕнелĕвĕн пирвайхи чĕкеçĕ вырăнне йышăнса пысăк хавхаланупа сцена çине кăларчĕ. Ăна лартнă чух Станислав Васильев талантлă режиссер хăйĕн шыравĕсем драматург шухăшĕсемпе пĕр кĕвве килнине тарăннăн туйса ĕçлени сисĕнчĕ. Вăйлă драматургисĕр саманапа тан утакан театр пулма пултараймасть-çке-ха.

Трагеди жанрĕн тĕп шăнăрĕ – яланах конфликт. "Кĕмĕл тумлă çарта" автор конфликта хамăр халăх кунçулĕпе шăпин чи хăрушă уйрăм тапхăрне çыхăнтарса тĕвĕленĕ: юлашки чăваш çынни тĕнчерен çухалĕ-и е хаяр тăшмана, хĕçпе çĕкленсе, тавăрмалла! Чĕрĕк ĕмĕр маларах пулса иртнĕ синкерлĕ ĕç-пуçсем уйрăм персонажсен аса илĕвĕнче çеç палăраççĕ. Марина Карягина чăвашăн хронологипе тĕл килекен пайăр фактсен историйĕнче шырамасть трагеди идейипе интригине. Уншăн чи кирли – халăх историйĕн философилле содержанийĕ, чăваш характерĕн, чун-кăмăлĕн тĕпри еңĕсем, тĕнче туйăма палăртакан шалти пахалăхсем. Çавăнпа та хайлаври ĕç-пуçсене пĕр-пĕр паллă событипе çыхăнтарма та, документ "чăнлăхне" виçсе тĕрĕслеме те май килмест. Çав вăхăтрах трагедин хивре фабули чăннипех те пулма пултарнă ĕç-пулăмсенчен явăннине те хирĕçлеме йывăр.

Ман шутпа, трагедин тӗп пӗлтерӗшӗ автор ун жанрне пысӑк ӑсталӑхпа (пирвайхи опыт!) калӑпланинче ҫеҫ мар – ан тив, вӑл та ӑмсанмалли шайра тейӗпӗр кунта. Мана акӑ мӗн тӗлӗнтерет: ӗмӗрсен тӗпӗнчи, сӗм авалхи пурнӑҫа сӑнланӑ чух автор темле майпа паянхи ҫивӗч ыйтусене, хамӑра тӑллакан, ӑса, чуна пӑркӑчлакан чӑрмав-йывӑрлӑхсене тӗпе кӑларса тӑрататӑ. Пушӑ "илем", чакӑр сӑрӑсем, пурнӑҫ кичемлӗхне кӑштах сирес, куракана тӗрлӗрен майпа астарас-илӗртес тени пачах та ҫук автор шухӑш-тӗллевӗнче. Халӑх ӑсхакӑлӗн символӗ ватӑ Шурсухал хӑйне чӑваш ҫыннин инкеклӗ шӑпишӗн яваплӑ туять:

Ҫаратрӗҫ, ватрӗҫ, парӑнтарчӗҫ,
Чӑваш пулса юлмашкӑн чарчӗҫ.
Эх, ӑсӑм – хурҫӑ, шухӑш – тарҫӑ,
Телейӗм яшлӑх евӗр тарчӗ...
Мӑшкӑлласан – чӗнместпӗр,
Хӗнеҫҫӗ тӗк – йӗместпӗр.
Ыйтаҫҫӗ тӗк – алхапӑл
Мӗн ыйтнине паратпӑр,
Кулсассӑн – харӑс унпа тан
Кулатпӑр хамӑр хамӑртан.
Пӗлетпӗр: хирӗҫ каласан
Чӗлхе кастарӗ юнӗҫен.
Калаҫайми пулсассӑн халӑх
Тӑван чӗлхе мӗскер тумалӑх...

Ватӑ ӑсчахӑн монологӗнче синкерлӗ ӗҫ-пуҫсен сӑлтавӗ палӑрать: "Сӗт тӑррине пухса илсе йӑха хӑварчӗҫ шӗветсе. Чи ӑслӑ, харсӑр паттӑра чее тӑшман тытрех тара". Кунта чӑн малтан тӑшмана сутӑннӑ ертӳҫӗ Туймӑрса пирки сӑмах пырать, йыш тӗрекӗ пулма тивӗҫлӗ патвар арҫынсем те, тӑван йӑхран ютшӑнса, ун хыҫҫӑн каяҫҫӗ. Ҫапла вара чӑвашсене

хăрушла йывăр вăхăтра ертсе пыма, ватă-вĕтĕсемпе хĕрарăмсене хӳтĕлеме тивĕçлĕ арсем тăшман енне куçаççĕ: унта, вăйлă та йышлă халăх хӳттинче, шанчăклăрах, хăшĕсене мулпа астарса-илĕртсе хăйсем майлă çавăраççĕ, ют ăрăвăн хĕрĕсен ытамĕнче телей-киленĕç шыракан та пур. Пĕр сăмахпа, ку нихçан кивелми лейтмотив: чăваш пулма пăрахмасăр, анне чĕлхинчен писмесĕр (паян – вырăса тухмасăр) карьера тума та, пысăк шалуллă ĕç вырăнĕ тупма та, влаçа ларма е министр-депутат вырăнне тăпăлтарса илме те нимле май та, шанчăк та çук. Пуç пулма лартнă пуççăр тӳре-шара пур вăхăтра та пулнă. Автор чуна пусахласа, пирчеми суранлатса тăракан хамăр нацин ыранĕ, тăван чĕлхемĕрĕн, чăваш чун-хавалĕн "ура йĕррилĕх" çеç (хăй калашле!) тăрса юлнă ирĕкĕ пирки шухăшлама чĕнет, пин-пин чăвашăн тĕлĕрекен ăн-пуçне вăратасшăн. Çавна пулах трагедин пафосĕ Çеçпĕлĕн "Юлашки чĕллипе" ассоциациленет.

Вăрçă-харçă – арсен ĕçĕ. Анчах та вĕсем юлман пулсан? Ама çынсем йăх тымарĕсене кăклама парас мар тесе кĕмĕл çар тумне тăхăнаççĕ, арçынсенчен кая мар хастар çапăçаççĕ. Пултаруллă Элпану ертсе пынипе ама çынсем халăх пурнăçĕн тăтăрхине, сывă йăли-йĕркисене хӳтĕлеççĕ, йăха пĕтме памаççĕ. Характерсене хăртанă чух автор çурма виçепе çырлахмасть: хаярлăх, курайманлăх, хастарлăх, каварлăх, пĕр-пĕр туйăм час-часах чикĕсĕр, чарусăр арасланса кайни куç умне тухать. Малти планри персонажсен характерĕсем колоритлă, асра юлаççĕ: Мăн Ама – чăваш йăхĕн символла тымарĕ, Ашапатман вĕрӳ-суру чĕлхине хăватлă туять, унпа усă курса чее тăшман йышне чакарать. Çар пуçĕн çумĕсем – Шерпенеспе Элиме, Шелепи – пурте тăшман кĕтмен паттăрлăх кăтартаççĕ, чыса куç пек упраççĕ.

Трагеди конфликчĕн кульминацийĕ Элпану хăйĕн тахçан, çуралма ĕлкĕрсенех тăшман хĕçĕпе "вакланнă" ывăлне тĕл пулнипе çыхăннă. Тăван йăх юнĕ йыхăрать

Таймаса, ăна кунта туртаканни – ытарайми хитре Шелепи. Хăй вăхăтĕнче каччă ăна, тыткăнрискере, ирĕке тухма пулăшнăччĕ, хăй вара маттур пикешĕн канăçне çухатнă. Таймас Шелеписĕр тек пурăнма пултараймасть, тупать-тупатех ăна шыраса. Хальхинче хăй ирĕкĕпе тыткăна лекнĕ Таймаса Шелепи хураллать. Хуралçă самантлăха шыва кĕрсе чăмса илес тенĕ самантра нĕрсĕр хĕрарăм, сутăнчăк Хĕркке каччăна, унпа савăшасса сăхланса, нӳхрепрен ирĕке кăларать. Çак самантран ларутăрусем ыткăнуллă хăвăртлăхпа аталанаççĕ. Тытăçса ӳкнĕ Таймаспа Шелепи, тин çеç тăшмансем пулнăскерсем, пĕр-пĕрне палласа илеççĕ, сăваплă юрату туйăмне парăнаççĕ. Çав вăхăтра ирсĕр хĕрарăм, Шелепине айăпламалли сăлтава хăй шухăшласа кăларнăскер, Элпану патне çитсе элеклесе парать. Сут тăвакан аслă тӳре Элпану, хаярлăхне ниçта шăнăçтараймасăр, Таймас кĕпине туртса çурать те... ывăлĕн хырăмĕ çинчи пысăк турпаллине асăрхать. Хăй çуратнă ылтăн тĕпренчĕкĕ, телейсĕр ывăлĕ тăрать иккен ун умĕнче. Трагизмла сăнарсем, жанрăн çирĕп саккунĕпе, паттăррăн вилеççĕ. Элпану та, Таймас та, Мăн Амапа Шурсухал та...

Синкерлĕ лару-тăрусем витĕр тухнă чăваш йăхĕн хĕвеллĕ те тăнăçлă ирĕ пек курăнать юлашки сцена: Шелепи, чыслăн, пуç пĕкмесĕр çĕре кĕнĕ Таймасран тăпăлкка йĕкĕреш, арçын ачапа хĕр ача, çуратать. Турă пур, çут çанталăк та хĕсĕр мар иккен! Кунта каллех ытарлă пĕлтерĕш тарăн. Истори тĕрĕсленĕ пысăк чăнлăха аса илтерет автор. Çĕнтерӳпе ытти халăхсене чуралантарса мар иккен йыша пĕтĕçтерме пулать. Тăшман мăшкăлĕ пулса курнă хыççăн тинех халăхăн сывă, таса та тӳрĕ чунлă, мал ĕмĕтлĕ ывăл-хĕрĕсем пĕр йыша чăмăртанаççĕ, ант сăмахĕсем каласа, çĕр çыртса тупа туса, Ирĕклĕхшĕн кар тăраççĕ. Историн усăсăр урокĕ мар ку. Кунта автор пире, паян çĕр çинче пурăнакан чăвашсене, хамăра хисеплеме, хамăршăн пур майпа та

çине тăма кирлине астутарать, чăмăртанма чĕнет, Пуласлăх хамăр алăра пулнине туйтарать.

Эп Улăп йăхĕнчен пил илнĕ
Вутра – хĕрме, шывра – çунма,
Çут тĕнчене савмашкăн килнĕ
Чăваш ятпа, йăваш чунпа.

Ĕненсе тинкерет автор малашлăха: "Пин çуллăхсен пушарĕ витĕр умра куратăп йăхăма!"

Кĕвĕллĕ, шалтан çуталса тăракан таса та сĕтеклĕ чĕлхе сцена çинче вылякансемшĕн тахçантанпа кĕтнĕ парне: шухăша уçăмлă çавăрса калама май парать, чăлхантармасть. Уйрăм йĕркесем чеканка пек, вĕсенче афоризмла тарăнлăх, çав вăхăтрах ансатлăх та. Карягина чĕлхине ятарласа тĕпчес пулать. Сĕм авалхи самана сывлăшĕпе сывлакан трагедин тарăн та сулмаклă чăнлăхĕ чĕлхе витĕмлĕхĕнчен нумай килнĕ. Асаттесен чĕлхин тăп-тăрă çăлкуçĕ патне тертлĕ шыравра пырса тухнă поэт алтăрпа ăснă пек ăсать сĕткенлĕ сăмах шерпетне: чĕлхере вара – пĕрпĕтĕмĕшле чăваш тĕнче тытăмĕ. Çак тĕнче – Карягина пултарулăхĕн никĕсĕнче е тĕпелĕнче, урăхла каласан, ун пултарулăхĕ пĕтĕмпех çак тĕнчерен. Чăваш менталитечĕн сайра тĕл пулакан тĕслĕхĕ ку. Ытларах чухне вырăсла шухăшласа, вырăс чĕлхин сăмах майлашăвĕсемпе усă куратпăр-ха ("Вырăссенчен илетпĕр янкăр копи..." Митти Кеоркĕ).

***Юрий АРТЕМЬЕВ,***
*филологи ăслăлăхĕсен докторĕ*

## КĔМĔЛ ТУМЛĂ ÇАР

Сăнарсем:

МĂН АМА – йăх пуçĕ, 100 çултан тахçанах иртнĕ.
ШУРСУХАЛ – Мăн Ама хăтăшĕ.
ЭЛПАНУ – Шурсухалăн хĕрĕ, çар пуçĕ.
ШЕРПЕНЕС – Элпану çумĕ.
ЭЛИМЕ – Элпану çумĕ.
ШЕЛЕПИ – паттăр хĕр.
ХĔРККЕ – аскăн хĕрарăм.
АШАПАТМАН – юмăç.
ТАЙМАС – ют йăх арĕ.
ТУЙМĂРСА – Мăн Ама мăнукĕ, Элпану упăшки пулнăскер, сутăнчăк.

Ама çынсем, ачасем, ют йăх арĕсем.

## *Пĕрремĕш курăну*

Йăх вучахĕ çунать.
Хĕрарăмсем тĕрленĕ май юрлаççĕ.

Юнпа хутăш пĕвере
Шур акăшсем ишеççĕ,
Чăма-чăма тухаççĕ...
Таса пулăп темеççĕ –
Урăх шывсем çуккăран
Ишме тивет суккăррăн...

Чŭк лаппи. Шурсухал пĕчченех.

**ШУРСУХАЛ:**

Эй, пŭлĕхçĕ! Кунсем кăра, хура!
Чун – ирĕкшĕн, кĕлеткесем – чура.
Ан мантарсам чăн паттăр çуратма.
Çын мулĕпе пуйма, хурах пек çаратма
Хальччен эп хам та, йăх та тăрăшман –
Тăшман та пултăр юрăхлă тăшман...

Эй, пŭлĕхçĕ! Упра амасене
Ырă мара сисен чун-чĕрене
Кăшт канлĕх пар, хĕрхен пире,
Чĕркуçленсе кĕтсе илер ире:
Çитет, пуç çапнă тăшмана ĕнер –
Хĕвел умне кăна чĕркуçленер.

Шурсухал тавра хěр упраç пуçтарăнма пуçлать.

Сĕм ĕмĕртен, мĕн авалтан
Янтти пире кирлĕ пулман,
Ик аллăм ĕçĕ – ман хуçа,
Тытса усрать вăл пурнăçа.

Çаратрĕç, ватрĕç, парăнтарчĕç,
Чăваш пулса юлмашкăн чарчĕç.
Эх, ăсăм – хурçă, шухăш – тарçă,
Телейĕм яшлăх евĕр тарчĕ...

Мăшкăлласан – чĕнместпĕр,
Хĕнеççĕ тĕк – йĕместпĕр.
Ыйтаççĕ тĕк – алхапăл
Мĕн ыйтнине паратпăр,
Кулсассăн – харăс унпа тан
Кулатпăр хамăр хамăртан.
Пĕлетпĕр: хирĕç пуплесен
Чĕлхе кастарĕ юнĕçсен.
Калаçайми пулсассăн халăх
Тăван чĕлхе мĕскер тумалăх?
Кĕнекене çаплах тĕп турĕç,
Тавах, çырлахрĕ Аслă Турă:
Тумтир çине çырать ама –
Тĕрри куçать ламран лама.
«Мĕнле ăрат ку? Ма йăшман?» –
Аптрать йăх-ях та пур тăшман.
«Çитет тÿссе, тăван, ирĕкелле!» –
Çапла вуларăм эп пĕрре кĕлле.
Сутăнчăксем çĕрле те тĕлĕрмеççĕ –
Кайса калана ывăç кĕмĕлле.

«Эпир – пĕр йăх, эпир халь
хурăнташлă,
Ик аллăра – пĕр ĕç: тăрмашăр, юрлăр,
ташлăр...
Усламĕ – пирĕншĕн, ĕç вĕренни – сире:
Пĕлӳ халь шутсăр хаклă тĕнчере!»
Тӳре çапла шутарчĕ çуллă сăмахне.
Ăнлантăмăр, кун-çулăн йывăр тумхахне
Çĕнсен çĕнейĕпĕр ăша хыпсан кăвар.
Чăн çул-йĕре тупар, Турра тупа тăвар!..

Майне-шывне тупайрĕç пур пĕрех:
Нумай-им кирлĕччĕ ун чух пире?
Сĕт тăррине пухса илсе
Йăха хăварчĕç шĕветсе.
Чи ăслă, харсăр паттăра
Чее тăшман тытрех тара.
Çул пуç ăçта – ун йышĕ те унтах,
Сутăнчăка тинех палларăм! А-а-ах!..

Суя сас çукчĕ кĕвĕре –
Ĕнентĕм хам та кĕрĕве!
Ылхан мана, ватта! Ылхан!..
Куçа чавса кăлар, çăхан!..

Шурсухал аллисемпе тӳпенелле ăнтăлса çĕре тĕшĕрĕлсе анать.

**ШУРСУХАЛ** *(сывлăш çавăрса малалла калаçать):*

Йăх пуçĕн амăшĕ, тăхлачă, Вут Ама,
Пултараймарĕ тек чăтса тăма.
Те амара тĕнче хăвачĕ ытларах –

Пуласлăхшăн çĕнет вăл пусмăра.
Йăха пуçтарчĕ те каларĕ ман тăхлачă –
Кашни сăмахĕ хĕçчĕ, сăнă, хачă:
«Тĕнчемĕр – ирĕк, ирĕклĕх – пирте,
Апла мĕн-ма тӳсес ку хĕн-терте?
Хăй мулĕпе хăй чыхăнтăр ман ывăл!
Сăваплă вут! Ырришĕн эсĕ ырă,
Ман чĕрене кĕрсе хăватлантар.
Суя арсен мĕскĕнлĕхне мантар!»

Аçа та çиçĕм, çумăр, çилччĕ...
Ун кинĕ, хĕрĕм, йывăр çынччĕ.
Утланчĕ ут куççулĕ витĕр.
«Тăхта, упран! – хистерĕм питĕ, –
Ӳксен лаша айне ан ӳк!..»
Çук, итлемерĕ Элпану.
Тăхлачă ман, Таса анне,
Сӳсе ӳкерчĕ сурпанне,
Ăна шар-р çурчĕ çурмалла,
Элем çĕклерĕ: «Малалла!»
Юлан утçа ют йăхăн арĕ
Умрах хĕçпе касса вакларĕ...
Сурпан çурри юнпа исленчĕ...
Ăрат малашĕ те вĕçленчĕ...
Хытса хуралчĕ ман ĕрчес тымар:
Мăнукăм – вилĕ, хĕрĕм...
Ырра мар!..
Çак ăрăва упраймасан,
Чĕрем, эс ма ахаль касан?

**ХĔР УПРАÇ** *(пăшăлтатса):*
Юмах калать пуль Шурсухал.
Халапсенче чăнни сахал.

Кашни халап чăн пулнă, тет анне,
Пĕлесчĕ ку юмахăн тăсăмне!

**ШУРСУХАЛ:**

Текех качча каяс темерĕ хĕрĕм,
Ар ăратне каçараймарĕ терĕм:
Çут тĕнчене килен ывăлсенне
Ашапатман татать-мĕн ĕмĕрне...

Епле чăтас ку йĕксĕк мăшкăлне?
Епле çăтас мăнаçлăхăм кĕлне?
Пур чысăм-чапăм пухăнать чышка,
Ырă мара сиссе чĕрем йăшкать.

Хĕрсем юнашар пырса лараççĕ.

**ШЕЛЕПИ:**

Мучи, чĕрен ун ĕçĕ çаплалла:
Мĕн виличчен пĕрмай йăшкамалла!

**ШУРСУХАЛ:**

Тем, аллăр ĕç тĕлне пĕлмест,
Тумтир хăйне хăй çĕленмест.
Утпа чупаççĕ çĕрĕн-кунĕн,
Упа тытса вăр-вар тир сӳнĕ...
Сире пулах, анра-сухра,
Пĕр ывăл çуралмасть йăхра!

**ШЕЛЕПИ:**

Мĕн япăххи хĕр вăйлă пулнинче?
Йăха тек пусмăрлаймĕ çак тĕнче!

**ШУРСУХАЛ:**

Ăста пăхать-ши Мăн Ама?
Йăха,тен, ар та кирлĕ мар?
Эп курнă хура-шур –
кун пеккинех курманччĕ,
Эх, иртрĕ ĕмĕрĕм, хĕвелĕм анчĕ, анчĕ...

**ШЕЛЕПИ:**

Çич ют хаяртарах пулсан
Хĕрхенĕ-и пире тăшман?

**ШУРСУХАЛ:**

Шăплан! Арсемĕр вăйлă та вĕри,
Пин çар пуçне тăрать пĕри-пĕри!
Чи вăйлисем... сутса пĕтерчĕç...
Хăйсен пуçне хăйсем çитерчĕç...

**ШЕЛЕПИ** *(аллисене çӳлелле йăтса):*

Ак сар хĕвел, ак сарă уйăх:
Суя арсем çуратмĕ ку йăх!
Тупа тăватăп, пӳлĕх, умăнта.
Эп çĕр çыртса калатăп çак анта. *(Çĕр çыртать).*

**ШУРСУХАЛ:**

Ачаш ача, халь ешĕл-ха туну,
Пиçсе те çитеймен айван тăну.
*(Айккинелле):*
Чăхсем автан пек аватаççĕ!
Саманине кура – ăрачĕ...
Çук, ырра мар, эх, ырра мар...
Упра пире, ыр Пихампар!

## *Иккĕмĕш курăну*

Мăн Ама чаплă пукан çинче пĕве кĕрсе пыракан хĕрсем кĕрешнине пăхса ларать. Шурсухал кĕрет. Мăн Ама умĕнче калпакне хывса пуç таять.

**ШУРСУХАЛ:**

Калас сăмахăм та нумай юлман-ха та,
«Хăта» тесе чĕнекене курас-ха терĕм,
«Кукаç» тесе чĕнекене илтесчĕ терĕм –
Пĕтерчĕç мăнука çĕр çăтмансем...

Тăхлач теме хăю çитернĕшĕн каçар,
Хăта теми те пултăн тем кăçал...

**МĂН АМА:**

Ынатланса аса илмелĕх
Ыр кунсемех пулмарĕç çав...
Вун мăнука ӳсме пур меллĕх
пурччĕ – кăларчĕçĕ тарça...
Ылхан çав çын çиен вăрça!
Вĕсем халь маншăн çук...
Пур вун пĕрмĕш – йăпатмăш,
Хĕр мар та – кин. Пуç ватмăш...
Пулмарĕ çичĕ ют чури –
Ман утăмпах утать ури.
Мухтав ăна, Элпанăва!
Кирлех тĕк, йăтĕ вăл тăва!

**ШУРСУХАЛ:**

Эп тиркеме хăяймăп хам хĕре.
Хăй арĕнчен иртекенни пĕрре

пулин: ыр-хаярсем каçарччăр,
Унашкалли пире татаччĕ.

Шурсухал кĕрешекен хĕр упраç еннелле кăмăлсăр-рăн пăхкалать.

Тиха тенин çăварлăх тутине
Вăхăтĕнче пĕлесчĕ те... Тинех!

Шурсухал инçетре тем илтсе сисчĕвленет.

Тинех килеççĕ ку сунарçăсем,
Тем кăшкăрать пĕри çывхарнăçем.

Шурсухал выртать те çĕр çумне сылтăм хăлхине хурса итлет.

Юлан утсем ăçтан çывхарнине
Çапла пĕлме хушатчĕ асанне.

Хĕрсем кĕрешме пăрахса йывăç тăррине хăпарса ларнă.

**ПĔРИ:**
Хĕрарăм вăл! Утпа та мар, çуран!

**ТЕПРИ:**
Çĕмрен пек ытканатчĕ, халь мăран.

**ТЕПРИ:**
Утсем анаççĕ ав çӳлтен!

**ШУРСУХАЛ:**

Ют тапăр тĕпĕртететĕвĕ илтеп!
Хĕрарăм темĕн кăшкăрать,
Калап тем хĕсрĕ кăкăра...

**МĂН АМА:**

Хĕрсем! Утсем çине!

Элпану чупса тухать.

**ЭЛПАНУ:**

Утсем сунартине пĕлетĕн, асанне!
Халь утсăрах эпир – уртарнă вăкăр!

**МĂН АМА:**

Тихасене кӳлмешкĕн вăхăт!

Тĕпĕртетӳ, шав, лаша кĕçенни.

## *Виççĕмĕш курăну*

Ют йăх эшкерĕ учĕсене килсе чарать. Аллисене çыхнă Шелепине илсе кĕреççĕ.

**ПĔРРЕМĔШ АР:**

Йăви кунтах вĕсен, пĕлетĕп.
Кунтах тупра, тыр-пул кĕлечĕ.
Хĕр-амисем килтех-тĕр-ха,
Пикисемпе киленĕп хам.
Ха-ха-ха...

И-45586
Национальная библиотека Чувашской Республики

**ТЕПРИ:**

Ан ман,
Чи шеппине юратӗ хан!

**ВИҪҪӖМӖШ** *(Шелепи пирки):*

Ку шерпете... эп хам та хирӗҫ мар,
Пӳ-сийӗ чӑмӑр, куҫӗ – шӗл-кӑвар.

**ТЕПРИ:**

Хан кӑмӑлне вӑл тӗппипе тултарӗ.
Епле пӑхать!

**ПӖРРЕМӖШ АР:**

Эс лайӑх ҫых-ха, тарӗ!
Вут кайӑк ку: тытан – кӗмест алла,
Халь-халь куҫран ҫӗтес хӗм-ҫӑлтӑрла.

Ахӑрса кулаҫҫӗ. Аллисене ҫыхнӑ Шелепи тарӑхупа тулса пуҫне мӑнаҫлӑн ҫӳлелле йӑтса тӑрать. Хӑй нумай чупнипе чӑм шыва ӳкнӗ.

**ВИҪҪӖМӖШ** *(кӗлтуса ларакан Шурсухала):*

Эс мӗн ҫӑвар карса ларан?
Турру та сан аран-аран:
Ӑна пыршу тухас пек йыхӑр –
Хальччен арканнӑ пӗтӗм йӑхӑр.
Хуралӑрта, тем, йыш сахал,
Ӑҫта хӗрсем, кала, Сухал!

Чӗнекен ҫук.

**ПĔРРЕМĔШ АР:**

Каяр, çитет сăмах тӳсе.
Ку юлашки-тĕрешкисем –
Элчел кĕтсе ларса юласшăн.

*(Шурсухала).*

Е хирĕç эсĕ, çĕр çăтасшĕ?!

**ШУРСУХАЛ:**

Курмаллине эп куртăм çĕр çинче,
Мĕскер калам тăшманăн кусĕнчен?
«Çын юнĕпе тăранакан этем
Çын юнĕпе кӳпĕнекенччĕ», – тем...

**ТЕПРИ:**

Хуп шăршлă çăварна! Шăплан!
Ху сехетне кĕтмерĕн-ха апла?
Чыспа кайни пулать-и çакă –
Чĕлхесĕр вилтĕр! Касăр! Çакăр!

Темиçе ют йăх арĕ Шурсухала ярса илет. Шелепи, вăй илсе ĕлкĕрнĕскер, урса кайнипе сасартăк сикет те тискеррĕн кăшкăрса, икĕ урипе икĕ еннелле харăс тапса икĕ ара ывтăнтарса ярать, тытма пынă тепĕр арĕн тумтирне шăлĕпе çыртса çурса антарать, кăвапи айĕнчен тапса ӳкерет.

**ШЕЛЕПИ** *(çыхнă аллисене салттарма Мăн Ама патне чупса пырса):*

Эй, Мăн Ама! Хăтар мана!
Ик аллăмпа пăвам мур тăшмана!

Мăн Ама ун аллисене салтма пикенет – пушатса ĕлкĕреймест, арсем хĕре çулса илеççĕ.

**ПĔРРЕМĔШ АР:**

Çапла-и эс, вут кайăк?! Вут çĕлен!

Шелепи алли-урине малтанхинчен те хытă çыхса лартаççĕ.

Текех вĕçертмĕп, çиçĕм, ан çиллен!

**ТЕПРИ** *(Мăн Амана):*

Чĕлхе касмасăрах чĕлхесĕр.
Тен, суккăр та – ларать чĕнмесĕр.
Хăй элчелне хăй тупĕ ку хăрпан!
Алла варламăп лăпăр-лапăрпа.

Инçете кайса çухалаççĕ. Тепĕр енчен Элпанупа Ама çынсем ут тĕпĕртеттерсе килеççĕ.

**ЭЛПАНУ:**

Ёлкĕреймерĕмĕр, хĕрсем...
Ыр асанне, тăна кĕрсем...

Хытса кайнă Мăн Ама чул кӳлепе пек ларать. Элпану йывăç çинче çакăнса тăракан ашшĕн ӳтне курах каять. Чупса пырса антарать, чĕре таппине итлесе пăхать – вилнĕ. Элпану таталса йĕрет.

**ЭЛПАНУ:**

Атте! Аттеçĕм!.. Ирсĕрсем!..

*(Курăнман тăшмана юнаса).*

Нумай çӳреймĕр иртĕнсе!

*(Аташнă пек калаçма пуçласа).*

Ку – Элпану... Каçар ăнман хĕрне,
Эх, пулаймарăм-çке килте эрне...
Эп упраймарăм канлĕ ватлăхна,
Вĕренеймерĕм куçунтан пăхма...
Сар хĕр тесе сар кайăк пек юратрăн,
Сар ылтăнран сар капăрлăх шăратрăн...
Ёмпӳ ачи пек çитĕнчĕ пике,
Мăнаç пике! Нихçан пĕлмен шике!
Арсем пуçларĕç вăрттăн сăнама...
Хĕртен мĕн турĕ ахăр самана...

*(Сасартăк çирĕпленсе Ашапатман енне пуçне пăрса).*

Ашапатман, ыр йăлапа юмла,
Ват аттене ваттисем пек сумла.

Ашапатман апăс ĕçне пуçлать.

**ЭЛПАНУ:**

Атте! Ăсантăн таврăнми инçе...
Сĕрет кĕперĕн çулĕ çип-çинçе –
Пĕлетĕп, ӳкмĕн тĕпсĕр ханкăра.
Кунти хĕрӳшĕн пĕртте ан хăра.
Тек йĕмĕ вăл нихçан та куççульпе.
Сăмах парам, Хĕвел, таса Тӳпе!
Атте, чуну сĕт кӳллинче килентĕр...
Пирĕштисен юрри чунна илентĕр...

Виле çинчи йăла-йĕрке. Пытару.

## *Тăваттăмĕш курăну*

**МĂН АМА:**

Ан ÿпкеле хăвна, мăнукăм...
Парнем пур саншăн ак – мăн ухă.

Кинне ухă тыттарать.

Пехил сана. Пехил йăха.
Пехил çунатлă халăха.

**АМА ÇЫНСЕМ:**

Тайма пуçах, Хисеплĕ Ватă.

Ама çынсем хĕççи вĕçне тирнĕ çăкăра çыртса тупа тăваççĕ.

**ЭЛПАНУ:**

Чăваш пулма тупа тăватăп.

**АМА ÇЫНСЕМ:**

Чăваш пулма тупа тăватăп!

**ЭЛПАНУ:**

Тупа тăвап хаяр пулма,
Тупа тăвап хĕрÿ пулма.

**АМА ÇЫНСЕМ:**

Тупа тăвап хаяр пулма,
Тупа тăвап хĕрÿ пулма.

**ЭЛПАНУ:**

Тăван çĕре чапа хума,
Чĕлхем чысне çÿле хума.

**АМА ÇЫНСЕМ:**

Çĕре-шыва чапа хума,
Чĕлхемĕре чыса хума.

Ама çынсем йăх вучахĕ урлă сикеççĕ. Кăвар çинче çарран ташлаççĕ.

## *Пиллĕкмĕш курăну*

**ЭЛПАНУ:**

Аркатрăмăр çич ют çарне,
Хĕр лекрĕ çăткăн çăварне.
Эх, Шелепи, чи паттăр хĕр,
Чĕрем варнех хăвартăн йĕр.

Мĕн пĕчĕкрен пăхса, вăл тăлăхне
кура, ÿстертĕм ун хастарлăхне.
Ут утлансан – вĕçсе çÿретрĕм,
Ÿкмессерен – тăма вĕрентрĕм.
Хам хĕр пек, пĕртте хĕрхенмерĕм:
Выçça юлсан çитертĕм эрĕм,
Патак çитертĕм кутăн хăтлансан.
Çÿлти тĕнче! Ытла та хăтлă сан
ытарайми çăтмах уçланкисем!
Эппин ăна ху хутлăхна илсем!
Таса чунне сăвап кăна кăтарт,
Каçар! Çырлах! Хĕрхен! Хăтар!..

**АМА ÇЫНСЕМ** *(ахрăм пек хыççăн каласа):*

Каçар! Çырлах! Хĕрхен! Хăтар!

**ЭЛПАНУ:**

Ашапатман! Хӗр таврӑнмӗ халь тин...
Ун ячӗпе ҫиер-ха чӳк пӑтти.

Ашапатман чӳк пуҫлать.
Чӳк йӑли-йӗрки.

### *Улттӑмӗш курӑну*

**ЭЛПАНУ:**

Ҫӗнетпӗр вӑхӑт тытӑхне!
Выҫ кашкӑрла урас чухне
арсемӗр пулчӗҫ мӗскӗн анчӑк.
Амасенче ман ӳлӗм шанчӑк!
Ама пӗтерчӗ тӗк – йӑх-кӑкӑмӑр пӗтет,
Чӗрем «ама кӑна юна упрайӗ» тет.

**ХӖРККЕ:**

Мӗскер сӗнен хӗрарӑм пуҫупа?
Ама тенин кӑшт урӑхла шӑпа.

**ЭЛПАНУ:**

Е меллӗхшӗн ют йӑх йышне хушар-и?
Ҫул вӗҫӗ ку. Ку – хӑямат пушарӗ.
Пӳлмешкӗн сутӑнчӑк ӗҫне
ҫӗклетӗп тӗрӗслӗх хӗҫне!

**ХӖРККЕ:**

Ик ӗмӗр килмӗ, ҫавӑнпа та
Каяр ыр пурнӑҫ шырама

çăтмах иленнĕ çырана.
Куçа туртать-ха сăн-сăпатăр.
Çийĕмĕрте те кĕмĕл – чухăн мар,
Пӳ-сийĕр çук-и çын çине тухмашкăн?
Пуçра чĕм пур чухне выля та ашкăн –
Çуралнă ар киленĕçĕ пулма!

**ЭЛПАНУ:**

Чухахчĕ ирттерме хам ĕмĕре
Ар парнеленĕ капăр тĕрмере.
Саманисем-çке пулчĕç хирĕç.
Мĕн тейĕ çĕн пин çуллăх ирĕ?

Арсемсĕр юлтăмăр пулсан
Арсемшĕн те тытар ăса.
Ачасене усрасчĕ тĕрĕс,
Çырулăх пек упрантăр тĕрĕ.
Йăх юлтăр хамăр ăсансан,
Йăх-ях çӳретĕр ăмсанса.

**ХĔРККЕ:**

Эс «йăх» та «йăх» тесе тăратăн.
Вилсен хампа пĕрле тура та
Илсе каяймăп... Юлĕ хуйăх,
Юлсан юлать пĕртен-пĕр уйăх,
Хĕвел юлать пĕртен-пĕрре.
Мĕн уссăрах кĕрес чĕрре?
Ман халь пурнасчĕ савăнса,
Ар аллинче авкаланса.

**ЭЛПАНУ:**

Вил тăприсем те çуннă чух
Ман савăшмашкăн кăмăл çук!

Пуласлăх чанĕ – хамăр алăра,
Ун чĕлхине тататпăр хамăрах.

Çĕр кăкăрне вараласа
утса çӳрен тăшманăм пур.
Пуçне пырса кăшламĕ мур
ман вырăна – хамах касам!
Тăшман лăпланмĕ: килĕ, ишĕ...–
Çаплах сайралĕ йăх кил-йышĕ –
Çаратĕ, мăшкăлĕ, вĕлерĕ,
Чура тума хупса пĕтерĕ.
Çул юппинче тăрсан мĕн пулĕ?
Е – кĕрешӳ, е – аскăн çулĕ.
Чару-мĕн çук амашкасемшĕн,
Сăмахăм ман – хамашкалсемшĕн.
Утпа чупма пĕлетпĕр пурте,
Пĕр кăмăл пур, пур вăйлă туртăм,
Çĕмрен пек куçăр – тĕл пеме:
Хăятăп çар пухар теме!

Шелепи пек хĕрсемччĕ! Хурлăх...
Çуран чупса улт-çич уй урлă,
Тăшман çинчен хыпарлама
Пултарчĕ парăнман ама.

Элпану сĕрме купăспа хурлăхлă кĕвĕ калать.

**ЭЛПАНУ:**

Çулсемĕр иртĕç, иртĕç ĕмĕрсем,
Эп ант паратăп купăс ĕнĕрсе:
Ун пек хĕрсем çуратĕ-ха ман халăх!

Юнра – хĕвел, чунра – хавал,
вăй-халлăх!
Пиртен çуралнă паттăр амасем –
Пиртен çуралнă хатĕр амасем
(Чупуçă, сăвăç, юрăç, ухăç...) –
Тĕнче умне мăнаçлăн тухĕç!

Аслă çар кар тăрса тупа ташши ташлать. Хĕркке пĕчченех йĕлпĕрсе алă çупать.

**ХĔРККЕ:**

Маттур! Маттур! Тĕлĕнмелле маттур!
Тăхта-ха, Элпану, сăмахăм пур.
Хăварăр-ха пире иксĕмĕре –
Калаçмалли çитет ик ĕмĕре.

Элпанупа Хĕркке куçа-куçăн юлаççĕ.

## ***Çиччĕмĕш курăну***

Шелепипе Таймас тăшмансем пек те мар. Шелепи сăнран кайнă, ĕшеннĕ.

**ШЕЛЕПИ** *(питĕ хурлăн юрлать)*.

Çеçен хирте – чечен хĕр,
Чечен пулни мĕн усси?
Хĕвел пăхать, çил вĕрет –
Çавă пултăр чун уççи...

*(Тепĕр юрă пуçлать)*.

Шерте тăрăх хăмла çаврăнать,
Пĕвĕм тăрăх çĕлен явăнать.
Мăйăм патне çитсессĕн
Пăяв пулса чарăнать...

**ТАЙМАС:**

Чуна пăлхатрăн хурлă юррупа!
Эп – сĕм вăрман ачи, мăнттай упа,
Анчах вĕри чĕрем – этемĕн.
Ăна хура кĕлпе витеймĕн.
Çунать чĕрем. Чечекĕм, эсĕ
Кĕтрет пулса çумма килсессĕн...

**ШЕЛЕПИ** *(ăна пўлсе):*

Чĕрў хĕрў, вĕри пуçу!
Хам йăхсăр эп юлассăм çук.
Ăратшăн çитĕннĕ çĕртен
Ир лекрĕм мăшкăллă терте.
Пĕр чĕптĕм усă тăваймарăм...
Вĕлер – çич ютшăн пулмăп арăм!
Вилем чăн-чăн чăваш пулсах!
Сана çывхартмăп эп, хусах.

**ТАЙМАС:**

Ахаль вилни – йăхна хисеп-и?
Чысна нихçан хур тумăп эпĕ.
Сана хĕн-тертшĕн хăтармарăм.
Асап – хыçра, пул сарă арăм!
Йăтса çитерĕп ăрăс çĕршывне,
Кăкру çумне ачашшăн тĕршĕнме.

**ШЕЛЕПИ:**

Ман пĕр ҫĕршыв – йăх-кăкăм ҫĕрĕ.
Унта вилсессĕн те эп – чĕрĕ.
Нимле телей ҫĕршывĕ те
Рехет кӳреймĕ чул ӳте...
Ăрат ăҫта – эп ҫавăнта,
Арсем халь сумсăр ҫав унта...

**ТАЙМАС:**

Пĕрле шырар сан телейне!
Чухлатăп эпĕ ун тĕлне.
Пĕччен, ҫуран ҫӳре-ҫӳре,
Пĕр йĕрсĕр ҫĕтĕн тĕнчере.

Эс... уйрăм хĕр, утту та уйрăм...
Сан илемне эп витĕр туйрăм,
Палларăм виҫĕ ҫухрăмран,
Ăнлантăм: Тур ҫырни умра...

**ШЕЛЕПИ** *(татăклăн):*

Ҫапла вĕҫлер калаҫăва:
Е йăхăм маншăн, е – ҫăва.
Ик енлĕ шелсĕр тараса.
Ик ен те тĕрĕс. Чăн. Таса.

Эс пысăк чунлă. Тав сана.
Чуп ту ҫак тĕрĕллĕ ҫанна.

*(Таймас унăн сылтăм ҫанни ҫинчи тĕрре чуп тăвать.)*

Ман несĕлсен сӳнми хăвачĕ
Ӳтне те вилĕмсĕрлĕх ячĕ!

Эс ху тирӳшӗн чӗтремерӗн –
«Кайран мӗн курăп-ха» темерӗн...
Сыв пул, мана хăтарнă ар!
Пӗрне-пӗри манар! Манар...

Алă тытса уйрăлаççӗ. Таймас йывăррăн тăрса юлать.

## *Саккăрмӗш курăну*

Элпанупа Хӗркке иккӗшех.

**ХӖРККЕ:**

Ман сан валли кӗтмен хыпар та пур...
Ăмсанчăк пулчӗ маншăн сан шăпу.
Пӗр арçынна юратрăмăр санпа,
Эс хӳхӗмрех пулайрăн-тăр сăнпа –
Сана суйларӗ Улăп –Туймăрса,
Çӳрерӗм тăвăл евӗр тулхăрса.
Çӗн тинӗс уçрӗ-тӗр куççулӗ,
Яка пулмарӗ пурнăç çулӗ.

Упăшкапа пӗр çутă кун курмарăм...
Туймăрсана самант асран ямарăм:
Куçа хупсан пылаккăн киленсе
Ăнах саватчӗç мамăк аллăмсем...

Лӳппер чăваш, лăп-лап, пуклак чӗлхе...
Çук, вăранмарӗ пӗр ачаш хӗлхем.
Артак пулма пӗлмерӗ ар,
Хӗнерӗ, кăшкăрчӗ хăр-хар...

*(Пушшех хĕрӳленсе).*

Çум курăк хушшине çилпе вĕçсе килсе
шăтса ӳссе хуралнă евĕр роза –
сая кайса пĕтес пек шухă ăсăм!
Йĕри-тавра – пĕр сăсăл, сăсăл, сăсăл...

Ман пеккисем сахалăн халь, сахалăн –
Тĕнче çăкне йăтма та пур вăй-халăм,
анчах санпа ухмахланмашкăн мар,
Артак арпа ачашшăн ашкăнма.

Пурăнăçу, тен, пулчĕ читлĕх
сан хăвăн та, мăнаçлă Элпану,
Чылай пулмарăн йăпану
эс Туймăрсашăн: султăм – çитрĕ!

Ашапатман вĕрентрĕ таварма:
Патвар ара хир йыттилле урма.

**ЭЛПАНУ:**

Ашапатман? Вăл – ырă юмăç!

**ХĔРККЕ** *(тискеррĕн):*

Йĕрĕнмесессĕн – чĕрĕ юн ĕç.

Ахăлтатса кулать.

Кала вара мĕн кирлине,
Кала варли мĕн ятлине...

Аптракан марччĕ Туймăрса –
Ун юнĕ пăсăлчĕ урса.
Эс, пысăк хырăмлă ама,
Телей кӳресшĕнччĕ ăна...

Ачу та кун курмасăр вилчĕ –
Чунне тӳрех Эсрелĕ илчĕ.

**ЭЛПАНУ:**

Ывăлăм!..

**ХĔРККЕ** *(ухмаха ернĕ пек кулса):*

Эп пĕлнĕ-им – ылхан ик пуҫлă!
Вĕҫне тытса тăрать-мĕн уҫлăх:
Пĕрне сулни енне пăрать,
Теприн... кăшларĕ хам пыра...

Ман шутăмпа Ашапатман
Хăй тунине хăй ăнланман...
Мĕн пуласси пулатчĕ – пултăр,
Хăвачĕ саншăн та кăшт пур-тăр.

Ман хамăн чăнлăх халь – чараймăн,
Шуйттан та, Турă та чараймĕ.

*(Йĕкĕлтешсе).*

Эп тупăп та Туймăрсана
Чăваш парнелĕпĕр сана!

Ытах та кăмăлу юлсан...
Ютран та йĕрĕнмĕ ман ҫан!

Эс пурăн пӳсĕр-хĕсĕр арăмла,
Сăмаххупа пуласлăх ăрăмла!

**ЭЛПАНУ:**

Ывăлăм!.. Ывăлăм!..

Хĕркке тухса кайма тăрать, анчах Элпану тем аса илсе ăна çирĕп аллипе ярса тытать.

**ЭЛПАНУ:**

Хĕркке! Кала-ха, çĕр çăтасшĕ,
Сан ачусем халь мĕн чăтаççĕ?
Ăçта вĕсем? Кампа вĕсем?
Мĕскер тăран ĕсĕклесе?

**ХĔРККЕ** *(макăрса)*:

Е хам, е ачасемччĕ...
Тăпра юнпа исленчĕ...

Тĕнче пĕтес пекех хăрарăм...
Тем мар! Эп – сĕткенри хĕрарăм!
Çуратăп тепĕр çиччĕ, саккăр:
Тăвată хĕр, тăвата паттăр.

**ЭЛПАНУ:**

Эс... намăссăр! Эс... пўтсĕр! Кĕççе пит!
Ята ярса асаймăн пит!

Икĕ ама кĕрешме пуçлаççĕ. Пĕрре пĕри, тепре тепри çиеле тухать.

Юлашкинчен Элпану çĕнтерет.

**ЭЛПАНУ:**

Кĕрт амине мĕскершĕн хĕрхенес?
Эй, Элиме! Эй, Шерпенес!

Элимепе Шерпенес чупса кĕреççĕ.

Хĕркке пеккишĕн вырăн çук çарта!
Çак пилсĕр пў кĕллентĕр пушарта.

Вута пăрахăр!
Вут амăш, ахăр!

Элимепе Шерпенес Хĕрккене ярса тытса йăх вучахĕ патне сĕтĕреççĕ. Хĕркке май килтерсе вĕçерĕнет те Элпану умне чупса пырса чĕркуçленет.

**ХĔРККЕ:**

Хăвар мана, хĕрхен айван пуçа!
Эп ăнланасшăнччĕ çак ăссăр пурнăçа...
Сана итлем! Пĕртен-пĕр шанăç пар!
Суйсан... манпа калаçтăр Пихампар...

Асаплă шăплăх. Элпану вăрах тертленсе шухăшлать. Никам кĕтмен çĕртен Шелепи килсе тухать.

**ШЕЛЕПИ:**

Тăванăмсем! Эп таврăнтăм!.. Чĕрех!..

«Виле» курнипе пурте чĕлхесĕр пулса лараççĕ.

**ХĔРККЕ:**

Киле яраççĕ-им... леш тĕнчерен?..

**ШЕЛЕПИ** *(çиçсе):*

Чуну таса пулсан – яраççĕ,
Тата çĕр çул хушса параççĕ!

Анраса кайнă Хĕркке хăй мĕншĕн чĕркуçленнинине манса ура çине çĕкленет.

**ХЁРККЕ:**

Мерчен чиксе памарĕç-и?
Телей парса ямарĕç-и?..

**ШЕЛЕПИ:**

Тем пек парасшăнччĕ – илмерĕм,
Хам телее хам туптăп терĕм.

**ХЁРККЕ:**

Айван!.. Тăн-тан!.. Мĕнле ăспа илмерĕн?..
Унта çынсем... пĕччен-и... е икшерĕн?..

**ЭЛПАНУ:**

Кайса курсан пĕлен!

Хĕркке тăна кĕрсе мĕн пулса иртнине аса илех каять, Элпану умнелле упаленет.

**ХЁРККЕ:**

Хĕрхен!..
Кайсан килеймĕ тек Хĕркке...

**ЭЛПАНУ:**

Юрать... Яратăп ирĕке.
Тӳпен кăшт çирĕпрех йĕрке!

Хĕркке ланчăрах çĕре ӳкет. Элпанупа унăн çумĕсем Шелепине вĕрин ыталаççĕ.

**ЭЛПАНУ:**

Шывра та путмĕ Шелепи,
Вутра та çунмĕ Шелепи!

**ЭЛИМЕ:**

Телей тени – кĕтсе илнин саманчĕ!
Сана курас пĕр шанчăк та юлманччĕ...

**ШЕРПЕНЕС:**

Чунна çăлма ыйтсаттăмăр тивлет...

**ШЕЛЕПИ:**

Апла çăтмах кунтах тума тивет!

## *Тăххăрмĕш курăну*

Ют йăх арĕсем каварлашаççĕ.

**ПĔРРЕМĔШ АР:**

Кун пек ултав нихçан курман:
Вĕлертĕм – чĕрĕлнĕ тăшман!
Ама çарне епле çĕнер?
Мĕнле чеелĕхпе илер?

**ИККĔМĔШ АР:**

Те куç пăвса суйма ăста?
Тухатакан пĕлӳ – ăçтан?

**ВИÇÇĔМĔШ АР:**

Ама çынсем çĕлен пек пиçĕ пӳллĕ,
Çӳлевĕç пек! Вăр-вар та йăрăс, çӳллĕ!

**ИККĔМĔШ АР:**

Те çын вĕсем, те вупăр, аçтаха...
Кăралĕсем, пуç хӳтлĕхĕ паха!

**ПĔРРЕМĔШ АР:**

Сĕнсе пăхар, тен, ылтăн енчĕк?

**ВИÇÇĔМĔШ АР:**

Ама тенин чĕри хĕрхенчĕк...

**ИККĔМĔШĔ:**

Тен, пулăшу ыйтса пăхар?
Сиплер «хавшанă» сывлăха...

**ПĔРРЕМĔШĔ:**

Аманнă пек пулар та «сусăр»,
Ама-сиплевçĕ кӳтĕр усă!

**ВИÇÇĔМĔШĔ:**

Вăрттăнлăхне пĕлсе килер.
Çар пуç Амин чунне илер!

## *Вуннăмĕш курăну*

«Аманнă» ют йăх арĕсем Элпану умне килсе чĕркуçленнĕ. Кăраллă Ама çынсем халь-халь сиксе ӳкме хатĕр сыхă тăраççĕ.

**«СУККĂР» АР:**

Эй, ыр Ама, мăнаç çар пуçĕ!
Чапу ту витĕр те çул уçĕ!

**«ЧĂЛАХ» АР:**

Яту тавралăха саланнă.
Çăлакана епле-ха манăн?

**ЭЛПАНУ:**

Камшăн – кам: пĕриншĕн – çăлакан,
Тепришĕн – хĕрхенӳсĕр шăлакан!

**«УКСАХ» АР:**

Епле тупар-ши кăмăлна?

*(Кĕл туса)*

Тур сывлăх патăр ывăлна...

**ЭЛПАНУ** *(хăвăрттăн):*

Мĕн кирлĕ сусăр арсене?
Мĕн туртрĕ ку тăрăхсене?

**«СУККĂР» АР:**

Парне хуратпăр çĕр çине –
Ĕрчевлĕ пул, ĕçме-çиме!

*(«Суккăр» ар парнине çĕр çине хурать.)*

Çак арчара – çĕр çуллăх мул.
Эй, ыр Ама, усал ан пул!

Ар Элпану умне çиçсе-йăлкăшса тăракан арча кăларса лартать. Хĕркке тӳсеймесĕр чупса пырса арчана уçать, ылтăн-кĕмĕле ывăçла-ывăçла сапать.

**ХĔРККЕ:**

Куç алчăрать! Мĕнле пуянлăх!
Ил, Элпану, ар чунĕ анлă...

**ЭЛПАНУ:**

Ăçтан пĕлес ют çын чунне?
Ылмаш мĕн илĕ пирĕнне?

**«УКСАХ» АР:**

Пире санран сиплевçĕ кирлĕ.

**«ЧĂЛАХ» АР:**

Пиртен кашни мĕнпе-тĕр чирлĕ...
Сан çарунта пур имĕш юмăç,
Ахаль тумастпăр-çке-ха, пулăш!

**ШЕЛЕПИ:**

Ытла та çуллă сас!

**ЭЛПАНУ:**

Канашлама каяс...

Элпану, Шерпенес, Элиме мăнаçлăн ларакан Мăн Ама патне канашлама пыраççĕ.

**ЭЛПАНУ:**

Эй, Мăн Ама, ыр асанне!
Сиплер-ши тертлĕ арсене?

**ЭЛИМЕ:**

Пылтан пылак пуплевĕ –
Синкер пытарнă евĕр...

**ШЕРПЕНЕС:**

Сĕнӳ пур манăн, Мăн Ама:
Мул кирлĕ хӳтĕ тум тума!
Ăстаçă кĕмĕл тум хайлатăр:
Хушпу, ум-хыç тавраш, атă...
Çути таçтан çиçсе хăратĕ –
Сехри хăпать тăшман ăрачĕн!
Çак кĕмĕл çар тытса çурать
тăшман тирне çапăçура!

**ЭЛИМЕ:**

Эп, Элпану, хирĕçлеместĕп,
Аван сĕнӳ. Шеллен пуль эс те
аманнă мĕскĕн арсене?
Урса пăхар урни çине.
Суран çине мĕнле суран-ха?
Ашапатман вĕсен шуранкă
пичĕсене хĕретĕ кĕç –
Тĕменĕн пулĕ кĕмĕл хĕç!

**МĂН АМА:**

Нумай ман кĕмĕл – вун миххе
кĕреймĕ. Çук, çитмен мехел.
Янтти астармĕ кăмăла,
Нихçан савман эп çăмăла.
Этем тени çынах пулсассăн
Пĕрмай калать саспа та сассăр:
Нишлисене пулăшмалла!
Тăсса парар эппин алла.

Элпанупа унăн çумĕсем «аманнисем» патне пыраççĕ.

ЭЛПАНУ:

Ак мĕн каларĕ мăн канаш:
Эпир сире çăлма хавас
Эсрелĕн сивĕ аллинчен.
Ыр курăр... чирĕр иртиччен...

Ашапатман – хăватлă юмăç.

*(Ашапатмана)*

Ку мĕскĕнсем эрнелĕх юлĕç.
Вĕрсе-сурса эрне сипле,
Кашнин чунне чунпа итле!

ХĔРККЕ:

Мăнтарăнсем! Епле хĕрхенмĕн?..
Шăпа тени çапла хĕрхӳ-мĕн...
Сиплевçĕ тивĕç сиплеме.
Паратăп хамăн ӳплене!

## *Вун пĕрмĕш курăну*

Тĕтĕм-сĕрĕм. Ашапатман патĕнче «аманнисем» выртаççĕ. Юмăç вĕсене вĕрсе-сурса сиплес вырăнне вăрçă вутĕнчен сыхланмалли чĕлхе калать.

АШАПАТМАН:

Ылтăн вăрман,
Ылтăн вăрманта ылтăн юпа,
Ылтăн юпа çинче ылтăн кайăк.
Кайăк çăмартине хăçан та хăçан
вут пырса çĕнтерет,

Ăна çĕнтереес те çук,
Пирĕн çĕре те вут ан çĕнейтĕр.
Лăплан, ыр Вут ама,
Лар вырăнна!

Кĕмĕл вăрман,
Кĕмĕл вăрманта кĕмĕл юпа,
Кĕмĕл юпа çинче кĕмĕл кайăк.
Кайăк çăмартине хăçан та хăçан
вут пырса çĕнтерет,
Ăна çĕнтереес те çук,
Пирĕн çĕре те вут ан çĕнейтĕр.
Лăплан, ыр Вут ама,
Лар вырăнна!

Пăхăр вăрман,
Пăхăр вăрманта пăхăр юпа,
Пăхăр юпа çинче пăхăр кайăк.
Кайăк çăмартине хăçан та хăçан
вут пырса çĕнтерет,
Ăна çĕнтереес те çук,
Пирĕн çĕре те вут ан çĕнейтĕр.
Лăплан, ыр Вут ама,
Лар вырăнна!..

Хĕркке кĕрет.

**ХĔРККЕ:**

Каçар мана кĕтмен чăрмавшăн,
Ик куçăмри хĕлхем чăр-чаршăн.
Эй, ыр аппа, Ашапатман,
Сан чĕлхÿне чухласчĕ ман.
Вĕрент мана ăсталăхна –

вилсен те сиплĕн халăхна!
Эп шутсăр шанчăклă ама –
Юму юлать ламран лама.

Ашапатман ăна курмасть те, илтмест те, хăйĕн ĕçне малалла тăвать.

Хĕркке арсем патне пырать.

**ХĔРККЕ** *(сассине çепĕçлетсе).*

Мĕнле эсир? Суранăр хытă
чиксе кайсан – систерĕр: тытăп
чи сиплĕ курăк шывĕпе...
Çамку сан темшĕн йĕп-йĕпе...
Е сар хĕре куçларăн, кăйкăр?
Епле тўсейтĕр çамрăк кăкăр –
Чипер хĕрарăм юнашар!

*(Пăшăлтатса)*

Сывал-ха, çывăх туслашар!

Ашапатман наркăмăш шĕвекĕ хатĕрлесе çитерет, ăна ют йăх арĕсене ĕçтеричччен хăй тĕллĕн калаçать.

**АШАПАТМАН:**

Шерпетĕм хатĕр астивме,
Систер, шерпетĕм, асилме:
Килнин кайни паха!
Килнин кайни паха!

Сĕткен пĕлет хăй тивĕçне,
Сĕткен пĕлет хаяр ĕçне:
Килнин кайни паха!
Килнин кайни паха!

Аттеçĕм Турă! Мăн тĕмен!
Ултавçăсем ахаль килмен!
Арсен чунне чунпа итлерĕм –
Кашни чунра хуçи икшерĕн.
Турри те пур, шуйттанĕ те!
Кĕçех хĕвел пытанĕ те,
Пĕри çĕнтерĕ теприне:
Шуйттан путарĕ Туррине.
Вăл хăй ĕçне пуçариччен
Виле шывне пайлам çичче...
Ăша илем пур çылăха,
Çăлаймăп унсăр хам йăха!

Усса пымин тăшман кăварĕ,
Упра пире, Хĕртсурт кăварĕ!

Ашапатман «аманнă» арсене наркăмăш ĕçтерсе тухать. Лешсем ĕмĕрлĕхе çывăрса каяççĕ. Çакна курса тăнă Хĕркке мĕн пулса иртнине тавçăрса илет те çĕлен пек йăпшăнса тухса тарать.

## *Вун иккĕмĕш курăну*

Ют йăх арĕсем «аманнисене» кĕтеççĕ.

**ПĔРИ:**

Ама çынсем пиртен те чеерех:
Савса астарĕç, сĕнĕç те эрех
хаяр эмел хушса тĕппи ĕçтерĕç,
Вара каллех çўлте Ама эшкерĕ.

**ТЕПРИ:**

Çын мар вĕсем, чăнах та – халапран.
Хапха хупсан кĕреççĕ кантăкран!
Ытах çуран тесен, çуран килсе силлеççĕ,
Ик урине татсан – тăват уран килеççĕ!

Юлан ут тĕпĕртетсе килни илтĕнсе каять. Хĕркке кĕрет. Аллине мул арчи тытнă.

**ХĔРККЕ:**

Салам сире, патвар пăхаттирсем!
Хыпарăм хурлăхлă пулсан та
Малтан çакна калам: паха тирсем
пĕр-ик çулталăклăх та янтă!

**ВИÇÇĔМĔШĔ:**

Паха тирсем? Аван, аван!
Тата мĕнпе савăнтаран?

**ТЕПРИ:**

Ак ку мĕнле хитре арча?
Эрешĕ ылтăнлă, ача!

**ХĔРККЕ:**

Ку мул арчи, туссем, сиртенччĕ.
Унтах юлсан – мĕскер сипечĕ?
Çĕр варринчи хурах пулса вăрларăм –
Ахаль теветлĕ теветкел хĕрарăм.
Шуйханчăк кăмăл – шухăлăх кĕмелĕх –
Парне кĕтет пĕр кĕмĕл шăлкемелĕх.

Хĕрккене кĕмĕл ывăçласа параççĕ.

**ВИҪҪӖМӖШӖ:**

Эс шутсӑр палкама ӑста!
Аманнӑ арҫынсем ӑҫта?

**ПӖРИ:**

Мӗскер ҫиесҫӗ мӗскӗнсем?

**ТЕПРИ:**

Мӗнле сиплесҫӗ вӗсене?

**ХӖРККЕ:**

Эп хам та пулӑшрӑм пырса...
Вӗлерчӗҫ... наркӑмӑш парса...

**ПӖРИ:**

Мӗн-мӗн?! Вӗлерчӗҫ?! Тамаша!
*(Чӗрине ярса тытать. Ӑна шыв ӗҫтересҫӗ.)*
Мӗнле тӗплес ку чӑваша!

## *Вун виҫҫӗмӗш курӑну*

Мӑн Ама пӗччеnех. Мӑйӑр катса ларать.

**МӐН АМА:**

Тискер ҫилсен касси! Епле кӑра ку каҫ!
Мӗскер илсе килсе аркатӗ-ши ку сас?
Шалти вӗркев кунсем вӗҫленессе-ши?
Суран сисмест – чӗрем теме сисесшӗн.

**АЧА-ПĂЧА САССИ:**

Мăн асанне! Эпир уя каятпăр!
Аннесемпе хурал вăййи вылятпăр!

**МĂН АМА:**

Ача-пăча аслин йĕрне пусать.
Выляччăрах – вăййи килсен усса.
Ман пĕчĕк чух тетти те урăхлаччĕ –
Эп хам та ĕлĕк урăх хĕр ачаччĕ...

Хĕрхӳ кулăпа кулать.

Шăпа хăех вĕрентрĕ улшăнма:
Хĕвел хĕртсен хĕрме, шăнтсан шăнма
чун манчĕ тахçанах – çич ют сăнни
çитсе амантрĕ сар хĕвел сăнне.
Сап-сар хĕвел чĕп-чĕр юнпа хĕрелчĕ!
Мăнтарăн! Мĕнешкел ачаш хĕвелччĕ!..
Сар çу пек чĕлхемре – сар пыл пек сипĕ!
Сар хĕвеле тавăрмасан – вăл типĕ...

Миçе çулта-ши эп? Тăн çирĕп,
Шăл пур-ха – мăйăр катса çирĕм...
Этем пурнать çанталăк çавринче,
Ун çемминчен тухма ан пар, тĕнче!

Çĕртен иртсен çухатрăм çул шутне.
Тытса чараймăн вăхăтăн утне...
Мĕн тӳснине йăлтах аса илсессĕн,
Куç хуралса килет тĕнче пĕтессĕн.
Хура-шурне тутантăм мăй таран!
Эй, пурнăçăм, манран ăçта таран?
Вĕçне тухсан каçалăкăм йăранĕ
Çамка çине çырни йăлтах вуланĕ...

*(Ачасен шăв-шавĕ илтĕнсе каять.)*

Каллех çич ют эшкерĕ çывхарать!
Тӳпе хĕрри хăратмăш пек хура!
Пушар! Тĕнче çунать! Ку – вилĕм каçĕ!
Пирĕннисем хыçран пырса çапаççĕ!

Мăн Ама пӳлĕхçе пуç çапма чĕркуçленет. Пушар çути пĕтĕм тавралăха çутатать. Чуна çӳçентерсе хура мĕлкесем ташлаççĕ, вĕсем çын кӳлепистене çаврăнса пĕр-пĕрне вĕлерме пуçлаççĕ. Тытăçу. Кĕрлев, лашасем кĕçенеççĕ, ачасем йĕреççĕ...

**МĂН АМА:**
Тĕнче çунать! Çĕр чăмăрĕ çунать!
Шалта вăл вăрттăн тахçанах çунать!
Ахрат çырмиллĕ ахăр самана!
Çыран хĕрри халь-халь юхса анать...

Сасартăк пĕтĕм тавралăх шăп пулать. Тӳнсе каяс пек ыванна Элпану суранĕсенчен юн юхтарса килсе тухать.

**МĂН АМА** *(асăрханса)*:
Ăçта ытти ама çынсем?

**ЭЛПАНУ** *(илтмен пек)*:
Ăçта, ăçта ачамăрсем?!.

**МĂН АМА** *(хыпаланса ӳксе)*:
Хурах вăрларĕ-ши? Эй, Турă!
Элле, йăха пушар тĕп турĕ?..

Иккĕшĕ те вăйран сулăнса лĕпсĕрех çĕре ӳкеççĕ.

Пĕрремĕш пай вĕçĕ

















## *Пĕрремĕш курăну*

Ама çынсен пухăвĕ. Пурте тискер сăнлă.

**ЭЛПАНУ:**

Йăх малашне çухатрăмăр апла...
Ачасене вăрларĕ, мур ăрачĕ!
Те несĕлсем çӳлтен хăяв яраççĕ,
Те Турă тĕрĕслет пире çапла...

Е сутăнчăк ĕçлет калпай пек вăрттăн?! –
Чĕрем тапать сисчӳллĕн те
кăрт-карттăн.
Этемшĕн çылăх, илĕртмĕш чылай,
Нумай сĕнксе çӳрерĕмĕр çил май.
Çиле çурса утатпăр малашне!
Ачаш та вăйсăр, йĕрмĕш таврашне
халех ӳксе юлма хушатăп.
Сăмахăм – хĕç, эпех хуçа тăк.

**ШЕРПЕНЕС:**

Эсех хуçа, вĕри çар пуçĕ – эс,
Татса калатăп – паттăр Шерпенес.

**ЭЛИМЕ:**

Санпа эп хатĕр чăнлăхшăн вилме.
Татса калатăп – паттăр Элиме.

Ўтри хевте, чун-чĕрери хăват
Тăват енне тăватă çул тăвать.
Суйлар пĕрне – чăн ирĕклĕх çулне!
Кам пирĕн майлă – Элпану çумне!

Хĕрккесĕр пуçне пурте Элпану çумне пырса тăраççĕ.

**ХĔРККЕ:**

Мĕскер вăл – чăнлăх? Уншăн пуç хума
Ухмах алне хĕç тыттăр! Пуш сăмах!
«Эп Турăшăн вилем!» теме юрать,
Турри хăй мĕншĕн шăл йĕрсе тăрать?
Ан тив, ачасене вăл çăлтăр!
Çўлте, çўлтех-ха манăн çăлтăр!
Эсрел хĕвне пуçа кайса чикме,
Каçарăр та, Хĕрккен мими типмен!

**ШЕРПЕНЕС:**

Хĕркке! Ытла та намăссăр-çке эс.
Кепе! Çак çылăха епле тўсес?

Турăран каçару ыйтса ик аллине çўлелле йăтать.

**ХĔРККЕ:**

Пурах тăк чăнлăх – Турă пулăшать.
Ытахальтен мĕн пăлхатас ăша?

**ШЕРПЕНЕС:**

Йăх çăкăрне харап тăвать, айван.
Несĕлĕсен пилне ăнланайман...

ЭЛИМЕ:

Ахаль каçартăмăр ăна:
Вăл ăмăрт мар... шăна кăна!

ШЕЛЕПИ *(мала иртсе):*

Эс мар-и сутăнчăк, Хĕркке?!

ХĔРККЕ:

Чипер калаç эс, чиперкке!
Çĕртен хăра, шывран хăра!
Çап-çамрăк, пăх-ха – ахăрать!

ЭЛПАНУ:

Хĕвел çине пăхса тупа ту-ха!

ХĔРККЕ:

Çук-çук! Мĕнле сутам-ха эп йăха?
Ача пулсан, ача йăтса калаттăм:
Таса ман чун, Хĕвел! Çӳлти хăватăм!..

ЭЛПАНУ:

Ан йăралан, Хĕркке, мăнаçлă пул.
Таса пулсан – таса чĕреллĕ юл.
Чĕрӳ таси, аллу таси аван-ха,
Хăш чух шухăшупа та çĕре ан-ха!

ШЕЛЕПИ:

Эс мар пулсан – пуласлăха кам çăлтăр?
Эп мар пулсан – ачасене кам çăлтăр?
Пин çул упрайнă чĕвĕл чĕлхенне
Эпир татар-и чĕрĕ хĕлхемне?

Çак çылăха хама илсен – çĕр çăттăр!
Вĕри юна пин çуллăх пăрĕ шăнттăр!
Куçран кӳтсе пăхаççĕ çĕртисем,
Куçран кĕтсе пăхаççĕ çӳлтисем!

**ЭЛПАНУ:**

Килессисем! Килес ăру асамĕ!
Сана шанса çавра кулач касам-и?

Çăкăр касса çыртать.

Тăшман хĕççи ан виттĕр тăхăма –
Ама пуçпа çар тумĕ тăхăнар.

Ама çынсем пĕрремĕш хут чăн-чăн çар тумĕ тăхăнаççĕ. Малтанхинчен вăл аркăсăр пулнипе тата хăш-пĕр хушма пайсемпе уйрăлса тăрать.

Ама çынсем çар ташши ташлаççĕ.

## *Иккĕмĕш курăну*

Тăвăл тулхăрать. Таймас пĕччен.

**ТАЙМАС:**

Эй, çеçен хир! Тусем! Вăрман!
Чун-чĕремри пăлхавлă тинĕс!
Эп çав хĕре тупмашкăн тивĕç.
Тупаймăп – хăрĕ кăкăр ман...
Тупаймăп – типĕ тĕпсĕр тинĕс,
Арпашĕ йăлт: шыври, çĕрти...
Пулинччĕ шанчăк! Йĕп çăрти! –
Ун витĕр утăп сана хирĕç.

Таймас йывăçсем хыçне йăпшăннă Ама çынсене асăрхамасть.

Эс çывăхрах – туять çан-çурăм,
Сисет чĕре, çуйханнă юн.
Епле вĕçмесĕр чăтĕ чун? –
Çĕр çук çĕрте çул уçрăм, Турă!

Мĕнле хăват ку? – Вĕççĕр туртăм,
Вут куçунтан пăхас килни,
Пĕр самантра çĕр хут вилни!
Эс тĕнчере пуртан юп куртăм.

Çак телее тата кам патăр?..
Выç кашкăр пек улас килет!
Пур усала çĕнес килет!
Сан умунта эп – хĕççĕр паттăр...

Тĕттĕмлĕхрен Ама çынсем вирхĕнсе тухаççĕ. Таймас хĕçне çĕклесе те ĕлкĕреймест, ăна çавăрса илсе çыхса пăрахаççĕ.

## ***Виççĕмĕш курăну***

**ЭЛПАНУ:**

Тăшман хаяр, тăшман чĕресĕр.
Унпа йăваш пулмарăр эсĕр.
Чапа çĕклер ютта çĕнсе.
Маттур! Чăн-чăн Ама çынсем!

*(Таймас енне пуçне сĕлтсе)*

Ку çич юта хăрушă сут кĕтет!
Ун тăмхине курсассăн чун кӳтет.
Çак йăх тĕп турĕ пирĕн арсене.
Ун чух шыв мар, юн тулчĕ варсене,
Çук, куççуль мар, юн тулчĕ куçсене!
Халь вăхăт урăх – тавăрма чĕнет.
Çĕр çул пек иртрĕ чĕрĕк ĕмĕр.
Халаллă тум – çав вăрçă хĕмĕ...

**ЭЛИМЕ:**

Сив нӳхрепе каяс та пăрахас!

**ШЕРПЕНЕС:**

Чи çирĕп хĕр сыхлатăр хураха!

**ЭЛПАНУ** *(çĕнĕрен хаярланса):*

Тăхта! Ăшра вăранчĕ кив кăралăх –
Хам аллămпа куçне чавса кăларăп!

*(Хăй тĕллĕн)*

Çук... Темскер шалтан тытса чарать...
Вăл – ман чура, эп – Турăшăн чура...

**ХĔРККЕ:**

Епле юмарт, тĕреклĕ ку хăна!
Тен, нӳхрепчен хĕве хупар ăна?
Йăха тăсмашкăн сывă вăрлăх кирлĕ,
Пăхатăп та, ку пит кĕрнек ӳт-тирлĕ.

**ЭЛИМЕ:**

Юрру шав аскăнлăх пирки.

**ШЕРПЕНЕС:**

Ялан çав шухăш сан, Хĕркке!

**ХĔРККЕ:**

Паллах çав шухăш – пĕр тĕллев пулсан:
Çĕн ĕмĕршĕн ман юн, малашшăн – çан.
Хĕрсем ма хĕсĕр? Ма хура ану?
Сан çылăху çак мар-и, Элпану?

**ЭЛПАНУ:**

Шăплан! Чар юплĕ чĕлхӳне!
Тасалăха ан хур йӳне!
Ача тума çитмен-ха вăхăт –
Тăшман сăнни чараксăр сăхă.

Ал сулăмĕпе Таймаса кайса хупма хушать.

### *Тăваттăмĕш курăну*

Çур çĕр иртнĕ. Тӳпене кăвак çут капашасшăн. Шелепи хуралта тăрать.

**ШЕЛЕПИ:**

Хивре кунсем хивре çĕрпе ылмашрĕç,
Кĕрешӳре суя та чăн арпашрĕç.
Ман чăнлăх – хĕç, хăватăм – ухă,
Хăлат пек çил çунатăм шухă.

Эрне эп чăлăм куç хупмарăм,
Çак вырăнтан пĕр шит хăпмарăм.

Тăшман тӳсет-çке – эп те тӳсĕп!
Килес кунсем тата та йӳçĕ.

### *Пиллĕкмĕш курăну*

Таймас тĕттĕм нӳхрепре ларать.

**ТАЙМАС:**

Хура кунсем хура çĕрпе ылмашрĕç,
Те ир, те каç – тĕнче йăлтах арпашрĕ.
Сĕм тĕттĕмлĕх мана çăтать, çăтать...
Чунри пушар! Кăра куна çутат!

Сана тăнчах çухатрăм-шим, савниçĕм?
Ăçта, ăçта уяр кунри çав çиçĕм?..
Хам айăппа çаклантăм ханкăра.
Пуçна ан ус, Таймас, çук, ан хăра!

### *Улттăмĕш курăну*

Шелепи хуралта. Шăппăн юрă ĕнĕрлет.

**ШЕЛЕПИ:**

Чĕнмест тӳпе, вăл итлеме пĕлет.
Йăлтах курать, йăлтах илтет пире.
Кӳтсе çитсен, куççулĕ вырăнне
Тăкать çут çăлтăр пуçăмăр çине.

Ав çăлтăрсем ишеççĕ ыйхăра.
Кӳлли шыва кĕмешкĕн йыхăрать.
Самант кăна: чăматăп та тухатăп,
Кичем каçа таса ӳтпе тухатăп.

Кĕмĕл тумне ним юлми хывать те шыва утса кĕрет. Таймас нӳхрепре стенасене хыпашлать, тухма май шырать.

**ТАЙМАС:**

Тарас! Çапла пĕлми пулас-и?
Вилсен те – вилĕп ирĕкре!
Тасалтăр чун ку кирĕкрен.
Тĕнче те – касмăк: ун тулашĕ.

Ан пӳл çула, йăваш мăранлăх.
Тарас! Тарас! Тарас! Тарас!
Анчах епле-ха уçтарас?
Йатти – çăраллă тимĕр алăк!

*(Шаккать)*

Эй, пур-и çын? Çӳлти хуралçă!
Уç! Сар куна курса юлам!
Каятăп месерле яла!
Ман айăп çук кунсем хурашăн!

Паçăрах нӳхреп таврашĕнче йăпшăнса çӳрекен Хĕркке тухать.

**ХĔРККЕ** *(пĕлмĕше персе, ачашшăн):*

Эй, кам хуçи ку сĕм тĕрмен?
Тухсам, арсланăм, питĕрмен!

Уçать, Таймаса тухма пулăшать.

**ХĔРККЕ** *(майĕнчен уртăнса вĕрин пăшăлтатса):*

Чĕрӳ таппи епле хăватлă!
Сана аннӳ савма çуратнă!

**ТАЙМАС** *(ăна кăкăрĕ çумĕнчен уйăрса):*

Кам пултăн эс? Хуралçă-и?

*(Тĕттĕм хыççăн çутă кун курма ĕмĕтленнĕскер куçне ĕненмесĕр йĕри-тавра пăхкалать)*

Хĕвел çапла хуралчĕ-и?

**ХĔРККЕ:**

Хĕвел хуралĕ малашне!
Унччен... кĕтет пире ĕшне!

*(Таймасăн кĕпине сӳсе илсе айккине ывăтать.)*

Хĕрарăм ӳчĕшĕн çунмалăх
Эрне усрать сана çак алăк...

**ТАЙМАС:**

Хăп ман çумран, вĕре çĕлен!
Эс мĕн майран пăвса çӳрен?!

Хĕрккене йăтса илсе таçта çити ывăтса ярать.

**ХĔРККЕ** *(йĕрмĕш сасăпа):*

Вĕре çĕлен – эп мар, эп – акăш!
Кунта чупса килет ав тахăш...

Упаленсе кайса пытанать. Çарамас Шелепи çӳлевĕç пек чупса килет.

**ШЕЛЕПИ:**

Те илтĕнчĕ, те туйăнать...

Хĕркке Шелепи хывса хăварнă çар тумне пуçтарса тытнă.

**ХĔРККЕ** *(ыттисем илтмелле мар, йĕкĕлтешсе):*

«Хурах-хурах! Тăшман тарать!..»
Ăна Хĕркке юри тартать.
«Чи паттăр хĕр»... «Чи шанчăклă пике...»
Халь тин кунта пач урăхла йĕрке!..

Куçран çухалать.

Çав хушăра Шелепи çарамассине пăхса тăмасăр чупса пырса Таймас çине сикет. Тискер кĕрешӳ пуçланать.

Нихăшĕ те çĕнтерейместь.

Иккĕшĕ те суранлă арăслан пек вăйран сулăннă. Таймас, Шелепине палласа илсе ун çаралăхĕпе вĕриленсе кайнăскер, халсăрланса ӳпне кайса ӳкет. Шелепи темиçе утăмра месерле выртать.

**ТАЙМАС** *(хăвăрттăн сывласа):*

Эй, Турă пур! Кĕтрет те пур иккен!
Çапла каллех тĕл пултăмăр, пике!

**ШЕЛЕПИ:**

Палларăм эпĕ те сана...
Асрах тытаттăмччĕ сăнна.
Эп – Шелепи, ята пытармăп,
Халь тин санран хăлаç та тармăп...

**ТАЙМАС** *(Шелепи çумне шуса):*

Таймас эп, хӳхĕм Шелепи!
Пӳрмен куна тек шеллĕп-и?
Халех вилем, телейĕм, чăтаймасăр –
Çак сывлăша телейлĕн çăтаймасăр...

Шелепи антăхса çăлтăрсем çине пăхса выртать.

**ШЕЛЕПИ:**

Тӳпе пире сăнать, Таймас!

**ТАЙМАС:**

Эп туйнине пĕрех туймасть...

**ШЕЛЕПИ:**

Тӳпе пин çуллăх пек пăхать!
Йăлтах курать – мĕн пур йăха!
Халь çăлтăрсем юмах яраççĕ,
Пире тем каласа параççĕ.

**ТАЙМАС:**

Ăса йăлт анратса ямалăх
Темскер пĕлет çӳлти аваллăх!
Пĕртен-пĕр Çĕр те пĕр Тӳпе –
Утса иртетпĕр кĕтӳпе...
Этем килет те ăсанать,
Тӳпи çаплах сăнать, сăнать...
Таймас тĕлне асап ярать,
Унтан телей курки парать...

**ШЕЛЕПИ** *(кăртах туртăнса):*

Эп хуралта тăратăп!
Пĕрремĕш хут... хăратăп...

**ТАЙМАС:**

Савни, эп сан тыткăнунта,
Эп ĕмĕр татмăп çак унка!

Таймас Шелепине ачашшăн сĕртĕнет. Хĕрпе каччă пĕр-пĕрне саваççĕ.

## *Çиччĕмĕш курăну*

Хĕркке Мăн Ама умне Шелепи тумне пăрахать.

**ХĔРККЕ:**

Ак сирĕн паттăр хĕрĕр –
Ачашлăр, шеллĕр, йĕрĕр!

**МĂН АМА:**

Вĕлерчĕç-им Шелепине?..
Пĕччен çĕ вăл çĕре, пине
тăратчĕ! Харсăр та хăюллă –
Кăмăлĕпе хай чăн-чăн Улăп.

**ХĔРККЕ:**

Çук, Улăп мар текех – кăпшанкă!
Пухса çӳреттĕм те вут-шанкă,
курах каям: ама çар тумĕ...
Хăйне кăтартăр-ха ак – тунĕ.

Хурал тăма мана шанмарăр,
Халь намăс-симĕс курса ларăр:
Вăл асрĕ тыткăнри арпа!
Ун хыççăн тартрĕ Мăн варпа.

**МĂН АМА:**

Чĕлхӳ ҫинчен ҫăпан ан кайтăр.
Мĕскер пайлас – пĕр тан-ҫке пайтăр!
Ҫĕклес чухне пĕрне-пĕри
ҫĕрпе танлаштаран юри.

**ХĔРККЕ:**

Чăн-чăн сăмах! Хĕвел те Уйăх!
Чунра тӳсме май ҫуккă хуйăх...
Ята ярать ясар ама!
Хушап пурне те калама!

**МĂН АМА:**

Хушма тăхта! Хушатăп эпĕ!
Йăхра хухман-ха чап-хисепĕм.

Кавал кăшкăртать. Элпанупа ҫумĕсем васкаса кĕреҫҫĕ.

**ЭЛПАНУ:**

Мĕнле усал хыпар тата?

**ШЕРПЕНЕС:**

Пĕччен кичем пуль Ыр Ватта?

**МĂН АМА:**

Кичем ларма питех памаҫҫĕ.
Халех пуҫтарăр йăх канашĕ.
Нӳхрепĕр пушă! Чăрсăр ар
тарма май тупнă. Тавăрар!

Элимепе Шерпенес тухса каяççĕ. Хĕркке вĕсем хыççăн лĕпĕстетет.

**ЭЛПАНУ:**

Кавал сасси чуна çуратчĕ.

**МĂН АМА:**

Йыхравĕ ун – çапăçураччĕ,
Анчах хăрушă хыпара
мĕнле çăтса юлам пыра –
йăлтах кавал сасне куçартăм.

**ЭЛПАНУ:**

Ку – вăйă мар, ку – вăйлă çар тăк,
Çарти йĕрке – мĕн пур çĕрте,
Кавал чуна сисчӳ кĕртет.

**МĂН АМА:**

Сисчӳ кĕме сăлтавĕ пур:
Тасан упран та – айăп кур...
нӳхреп çăри арканнă, кинĕм,
Çич ют хĕре чĕр мăшкăл кӳнĕ...

**ЭЛПАНУ:**

Шелепине çĕнен ар çук!
Мура апла вăрçу-харçу,
Мура хальччен чăтни-тӳсни –
Ман хĕр ар чухлĕ те ӳсмен!..

**МĂН АМА:**

Малтан эп хам та ĕненмерĕм.
Ăна ар çĕннĕ пулĕ терĕм.

Ҫӗнмен пуль ҫав, астарнӑ пуль...
Хӗрккен самант типмест куҫҫуль.
«Ак тумӗ» тет, «Ҫараччӗ» тет,
«Асар-писер асаҫҫӗ» тет...

**ЭЛПАНУ:**

Ӗнен Хӗркке павранине –
Тӑваткӑлли ҫавракине
ӗнентерейӗ куҫкӗрет,
Суйма пултарӗ тӗкӗре!

**МӐН АМА:**

Апла мӗн-ма ӑна шеллетӗн?

**ЭЛПАНУ:**

Эс ху пурне те ма пиллетӗн?
Улшӑнасса шанатпӑр мар-и?
Сӑваплӑ терт те пӗр тӗллев
пуҫтармалла пек пӗр тӗвве.

Ама ҫынсем ут тӗпӗртеттерсе килни илтӗнет.

**МӐН АМА:**

Пӗрле тарман-ши ик хӑлат?

**ЭЛПАНУ:**

Пулма пултарайман халап!

**МӐН АМА:**

Пулать ун пек! Хампа та пулнӑ,
Чун тӗпӗнче ҫути те юлнӑ...

Тахçан-авал, яш чух, эккей,
Юна пăлхатнăччĕ Шерккей...
Шанми пулсассăн юмаха
Хăй пурнăç йăлтăр! йăмăхать.

Ама çынсем кĕреççĕ. Хĕркке Шелепине турткаласа пырать.

**ХĔРККЕ:**

Çак аскăна халь кам каçарĕ?
Кала, ăçта ют йăхăн арĕ?
Мĕн-ма пĕрле тухса тармарăн? –
Ютра пулаттăн чаплă арăм.

**МĂН АМА:**

Ку камăн тумĕ, Шелепи?

**ШЕЛЕПИ** *(çирĕппĕн):*

Ку – манăн тумăм, Мăн Ама.

**МĂН АМА:**

Çак чыссăра эп шеллĕп-и?
Выç кашкăр пек ку шăлламас!

**ХĔРККЕ** *(Шелепине).*

Юхха та сутăнчăк ама!
Епле чăтса тăрать-ши çĕр?
Мулна пуçтар та ытама
çăвар уçмасăр вырт та çĕр!

*(Мăн Амапа Элпанăва).*

Мана шанмарăр курăнать.

Мана шанми пулнишĕнех
мĕн пур ĕç-пуçăр пуранать!
Ванать тĕнчемĕр, ишĕлет!

**ЭЛПАНУ:**

Ан йĕрĕнтер! Ахаль те тăвăр
чун-чĕрене!..

**МĂН АМА:**

Кама вăрçас?
Çак Мăн çула суйларăр хăвăр,
Çĕрпе çăрса туптарăр сас.
Шывра çунса вутра йăл илтĕр,
Çĕклентĕр ăмăрт пек çўле...
Ăçтан хăват? Хăват вăл – пил-тĕр,
Çил çуната пилли кўлет!

**ЭЛПАНУ:**

Пĕччен хăварăр халь мана...
Куçран пăхам çак амана!

Ама çынсем Мăн Амана чыслăн çĕклесе тухаççĕ.

## *Саккăрмĕш курăну*

**ЭЛПАНУ:**

Ĕненейместĕп сĕмсĕр Хĕрккене!
Ниçта кайса кĕме пĕлмен енне
Пуçа чикес теп çак йăлла...

**ШЕЛЕПИ:**

Çарта пулман кун пек йала.

**ЭЛПАНУ:**

Çарта пулман асас йала та!
Çарта пулман сутас йала та!

Шелепи Элпану умне ӳкет, урисене ыталаса йӗрет.

**ШЕЛЕПИ:**

Анне пек пултăн маншăн эс.
Аппа пек пулчӗ Шерпенес.
Элимене те пит юратрăм,
Эп сирӗн пек пулмашкăн картрăм.
Анчах... Анчах та пулаймарăм...
Ют йăх каччишӗн халь эп – арăм.

Элпану ăна ура çине йатса тăратать.

**ЭЛПАНУ:**

Чăнах апла?!.
Чи шанчăклă пике!
Çапла пӗçертрӗ ман пите!

Шелепи ун аллинчи йалла карт туртса илет.

**ШЕЛЕПИ** *(хăй тӗллӗн пек):*

Çак хатӗр йалă – маншăн... Маншăн мар!
Ман юрамасть яланлăх шанк шăнма...

Каллех Элпану умне ӳкет.

Каçар! Çав паттăр каччă
Мана чĕр мăшкăлтан çăлсаччĕ...
Таваруран тăмарĕ хăраса.
Эп, тимĕр чунлă чăрсăр хĕр ача,
Ăна ун чух тĕп тăваймарăм.
Шăпа-ши ку?.. Халь уншăн – арăм...

Шерпенес, Элиме, Хĕркке Таймаса илсе кĕреççĕ.

**ХĔРККЕ:**

Эс арăм мар – айсарăм!

**ЭЛПАНУ** *(ăна хăвăрт пўлсе):*

Сана чĕнме хушман!
Пач урăх шухăш ман.

Элпану çумĕсем пĕлсе çитнĕ ал сулăмĕпе вĕсене тухма хушать.

**ЭЛПАНУ:**

Калаçăр!
Таркăна сăмах.

**ТАЙМАС** *(Шелепине):*

Савниçĕм! Сансăр юлсанах
Ăнлантăм: чунăм суккăр,
Тарнин усси те çуккă...

**ЭЛПАНУ:**

Мухтав çакна чухлакана!
Пире хĕçпе юна кăна –

Хĕççӳ хăвна çурса антарĕ,
Тĕп пулĕ пур тĕнче ханттарĕ!

Ак хĕç сана. Малтан ăна,
Унтан касса вакла хăвна.

Таймаса хĕç тыттарать. Таймас хĕçне илет те çĕре тăрăнтарса лартать.

**ТАЙМАС:**

Çĕре кассан – юн тухĕ çĕрĕн,
Çав юнпала ӳте сĕрем,
Тупа туса çерем çием:
Сана саватăп, Пӳлĕх хĕрĕ.

**ШЕЛЕПИ:**

Вакла мана, савни, эп хатĕр.
Чӳкри парне пулса вилем!
Юнпа пĕвенĕ те элем –
Ман çарăм чăн тĕсне çухатĕ...

**ЭЛПАНУ:**

Эс вилнипе хĕвел сӳнмест.
Тĕнче арканĕ тетним эс?

*(Кăкăрне çапса)*

Кунта, кунта тĕнчӳ арканнă!
Элле йăхун антне эс маннă!

**ТАЙМАС:**

Шелепине ан айăпла.
Ĕç-пуç пуçланчĕ ак çапла:

Хĕркке мана тартасшăн пулчĕ,
Вĕре çĕлен пулса йăл кулчĕ.
Эп тĕртсе ятăм та ăна
Каллех çаклантăм тыткăна:
Хурал шыва кĕмешкĕн аннă,
Шăв-шав илтсе унта васканă.
Хал пĕтиччен кĕрешрĕмĕр вара.
Вăл парăнмарĕ вăй питти ара!
Унтан... палларăм эп хĕре –
Хăтарнăччĕ ăна пĕрре...

Пĕрле тарасшăнччĕ – пымарĕ:
«Кунта, – тет, – манăн йăх тымарĕ».
Нумай çӳрерĕм вăрманта,
Ак килтĕм: ăраскал кунта.
Вилни те, пурăнни те пĕр
Манпа пулмасть пулсан çак хĕр.

**ЭЛПАНУ:**

Суя! Кама шанас?
Кам куçĕнчен пăхса канас?!
Юрать, çич ют, ăнлантăм эп сана.
Хам аллăмпа тытса çурам сăнна!

Элпану Таймас тумтирне пĕр сулăмпа çурса антарать те сасартăк ун хырăмĕ çинчи тем пысăкăш хура тур паллине асăрхаса каялла чакма пуçлать.

**ЭЛПАНУ:**

Эй, Турăçăм! Тата мĕн кăтартан?
Чĕрем тухса тарас пек кăкăртан...
Ăçта ярса пусам? Мĕскер тăвам?
Е куçăма пăсать-ши куç păван...

**ШЕЛЕПИ** *(Элпанăва ӳкесрен ярса тытса):*

Мĕн пулчĕ, Элпану аппа?

**ЭЛПАНУ:**

Çак пирчемен чĕр асаппа
Эп чĕрĕк ĕмĕр пурăнатăп.
Çук чух та пур пек курăнатăп...

**ШЕЛЕПИ:**

Мĕнле, аппа, çук чух – пур пек?..

**ЭЛПАНУ:**

Сана çакна курма пӳрмен.
Шăп чĕрĕк ĕмĕр каялла
Тăшман... вĕлерчĕ ывăла...
Унпа пĕрле эп хам та вилтĕм...
Чул пек чунпа йăхран пил илтĕм:
«Тек вилмĕп эпĕ, чĕр виле,
Ачамшăн тавăрма пилле!..»

Хальхи пек уççăн астăватăп:
Эп ӳкрĕм ут çинчен... Тăрасшăн –
пултараймастăп... Ант тăватăп...
Ачам тухать... Умра – ун ашшĕ...

Çук, ашшĕ марччĕ вăл. Тăшман.
Те туйăнать, те чăн тăрать...
Ăна чĕнсе алла тăсман,
Тăссан та – йăлăнтăм Турра.
Ача çуралчĕ! Ывăл! Йывăр...
Ман майлă пулчĕ кĕр ĕшни...

Ӳссессĕн, терĕм, ырă-сывă
Вăл йăхшăн тухĕ кĕрешме.

Сунни пулмарĕ... Утлă тапăр
çил-тăвăл евĕрлĕ куна
килсе таптарĕ тапăр-тапăр...
Асра пĕр тур палли кăна...

**ТАЙМАС:**

Анне! Аннеçĕм!..
Элпану аппа...
Таймас-çке эп. Чăн чăвашла ятпа
çӳретĕп йăх ятне пĕлмесĕр.
Ик куçăма та уçрăн эсĕ!

Амăшĕпе ывăлĕ уйрăлми ыталанаççĕ.

**ТАЙМАС:**

Эс, Шелепи, мĕскер тăратăн,
Телей – сап-сар, инкек хура тăк!
Те чун туртать, те юн та –
Ялан эп туртăнтăм кунта.

Шелепи те вĕсене ыталать.

**ЭЛПАНУ:**

Тискер шăпа! Мăнтарăн ăраскал!
Ăçта – сехмет, ăçта чăн ăрăс халь?..
Халь тин мана мĕн-ма кун пек телей?
Хавасланасчĕ – кăмăл çĕтĕлет...

Эс ӳснĕ – кăкăр çитереймĕп
сана çумма чăмăртаса.

Çимен сĕтӳ, шăпун терменĕ
Ертсе çӳреччĕр çул туса...

Пехил парам та ăсатам,
Шăла çыртса йăлтах çăтам...

Таймаспа Шелепи ун умне туйри пек пил илме чĕркуçленеççĕ.

**ЭЛПАНУ:**

Вăрман пек пуян пулăр,
Уй-хир пек аслă пулăр,
Усала тӳртĕн çӳрĕр,
Ырра хирĕç çӳрĕр.
Иккăн выртса виççĕн тăрăр.

Таймаспа Шелепи тăраççĕ, Элпанупа ыталанса уйрăлаççĕ. Элпану аллине сĕлтсе тăрса юлать.

**ЭЛПАНУ:**

Пӳрмен телей – пӳрмен хĕвел...
Тек пăр татки шăнтмасть хĕве...

Элимепе Шерпенес кĕреççĕ.

**ЭЛПАНУ:**

Пурин те пур шăпа шалчи:
Эп мар, эп мар элчел элчи...
Тăван юнпа алла хĕретмĕп,
Тăван çĕрпе ютта çӳретмĕп.

**ШЕРПЕНЕС:**

Эс тӗрӗс туран, Элпану:
Асу-тăну – сан ылтăну.
Хайсен çăкне хайсем çӗклеччӗр,
чӳклес тесен – чунне чӳклеччӗр!

**ЭЛИМЕ:**

Мӗçкер тума хушан, çар пуçӗ?
Пуçсем вӗри, кунсемӗр йӳçӗ...

**ЭЛПАНУ:**

Ачасене тавăрмаллах!
Танмарлăх пуласси паллах.
Чеелӗх, ăс, асам тăваслăх –
Пӗр сăмахпа, чăн-чăн чăвашлăх
пулăшаканччӗ çӗнтерме.
Çӳлте курап йăх çăлтăрне!
Уша пире упрать, çăлать,
Вăл кăтартать умри çула.

Унччен те пулмасть, Хӗркке Таймас ӳтне йатса кӗрет, ăна Элпану умне пырса пăрахать.

**ХӖРККЕ:**

Мухтав пӗтевӗ çак майран!
Йатса çитертӗм Măн уйран:
Хай куçӗпе курмасӗр виллине
ӗненмӗ терӗм эп паттăррине!
Лешне тытса ӗлкӗреймерӗм.
Çӳлевӗç пек вӗçет, мур хӗрӗ!

Элпану тăм кӳлепе пек хытса каять.

**ШЕРПЕНЕС:**

Эс ма хушман ĕçе тăватăн?!
Тата чыслав кĕтсе тăратăн!

**ЭЛИМЕ:**

Ман шутăмпа, мăнаç çар пуçĕ,
Ахальтен мар «ылмаш» ун куçĕ!
Ан чар кăна, ик куçĕн шăрçине
Чавса кăларăп ывăçĕ çине!

Хĕрккен çăварне ан кăшкăртăр тесе урлă çыхса хурать.

**ЭЛПАНУ:**

Чаратăп! Икĕ чакăр куç,
Ик ал-ура, пĕр ăслă пуç...
Анчах та икĕ кăкăрне те
ĕнтес!
Хăйне пит хĕрхенетĕп:
Хушатăп кăларса ямашкăн –
Ун пек ассах çӳреймĕ аскăн.

Чылай каçартăм ун ӳтне –
Çитет! Ашапатман патне!

Çапкалашма пикеннĕ Хĕрккене çавăтса тухса каяççĕ.

## *Тăххăрмĕш курăну*

Элпану Ама çынсене пуçтарнă.

**ЭЛПАНУ:**

Ачасене хăтармаллах –
Эпир сĕм суккăр та чăлах
Умри яваплăхран тарсан!
Хатĕрленер хаяр вăрçа!
Малашлăха капла çул çук.
Çак тапхăра та Мăн Улшу
тесе ят парăпăр вара.
Малтан ярса тытар вăрра!

Çирĕппĕнех çакна калам –
Ку пултăр сирĕншĕн халал:
Ман кĕмĕл тумлă мăн çарта
Никам ан пĕлтĕр ăншăрта.
Вăрçа тухар сăвапшăн, чысшăн,
Тулли тивлетшĕн те мал йышшăн!
Асăрханма «чир-амакран»
Пĕр кăкăра ĕнтес кăкран!

*(Пурте ахлатса ярaççĕ)*

Ку чух хăрушсăрлăх паха –
Асса ан кĕрĕр çылăха.
Кăрал çакма та меллĕ пулĕ.
Çапла ама çынсен чăн çулĕ.

Ашапатман хушнă ĕçе пуçăнать.

## *Вуннăмĕш курăну*

Вăрçă пырать: Ама çынсем вăрланă ачисене çăлассишĕн кĕрешĕве тухнă.

**ХĔРККЕ:**

Эй, Элпану! Ылхан сана!
Эп ертсе килтĕм тăшманна!
Чĕр юншăн – юн! Кăлар пуçна!
Эп çĕнтерӳ юрри пуçлам!

Хаяр кĕрешӳре унăн сассине никам та илтмест. Кĕтмен-туман çĕртен вăл Туймăрсана курах каять.

**ХĔРККЕ:**

Эй, Туймăрса! Эсех-и ку?
Тĕл пулаймаççĕ тупа ту –
Эпир тĕл пултăмăр, хăлатăм!
Чĕнми ан тăр, мĕскер калатăн?

**ТУЙМĂРСА:**

Хĕрккеччĕ-и яту, пăтранчăк?
Сана курсан вăй-хал путланчĕ!

**ХĔРККЕ:**

Пăлханнипе, савниçĕм! Кил!
Сан кăкăрушăн хĕр çамки!
Сана кĕтсех яш ĕмĕр иртрĕ.
Тинех кĕлле ыр Турă илтрĕ...
Хăямата вăрçи-харçи –
Эп халĕ юрату тарçи!

**ТУЙМĂРСА:**

Сан ултавна чăна хума
Нихçан та кăмăлăм пулман!

**ХĔРККЕ** *(тарăхса):*

Çапла-и эс? Ултав мĕнне
пĕлетчĕ сан тăван аннӳ!
Йăху пĕлет эс сутăнчăк арне!
Пĕр маншăн çеç эс – чи ĕлккен парне...

**ТУЙМĂРСА:**

Çĕлен! Епле пăрать вут хӳрине!
Мана каçарĕ арăм, йăх, анне...

**ХĔРККЕ:**

Аннӳ вилни – пĕр чĕрĕк ĕмĕр!
Йăху – выçсан та памĕ чĕлĕ!
Кĕтсе илеймĕн каçару
Элпануран – хавшак çару!

**ТУЙМĂРСА:**

Ытла çӳле сикен, пăрça!
Çапла чикет сана урçа!

Туймăрса Хĕрккене сăнăпа чиксе вĕлерет.

## *Вун пĕрмĕш курăну*

Туймăрса Мăн Аман килне вăркăнса кĕрет. Мăн Ама пĕчченех.

**ТУЙМĂРСА:**

Никам та çуккă. Ват хăрпан кăна.
Ăçта ман йăх? Хĕрсем? Кĕтет хăна!

*(Шăплăх)*

Хăлхи те çук, чĕлхи те çук ват супнăн.
Ман Элпану хальччен тен, мăшăр тупнă?
Тĕлĕкĕмре те пăлхатать ăса!
Епле чиперччĕ те – паллах, асать!
Илсе каятăп Ирĕклĕ уя,
Тепре хăна пухатăп хам туя!

**МĂН АМА:**

Сан айунта вăл урăх пулас çук!
Таса Элпанăвăн – вĕр çĕнĕ çул!

**ТУЙМĂРСА:**

Кам калаçать?! Вилме пĕлмен хĕртсурт!
Хуçа эп хам килте, ку – манăн çурт!
Элпанăву, йăху, пĕлес килсессĕн,
Чуралăх тыткăнра! Туйман-им эсĕ?

Мăн Ама шăппăн та хăватлăн çĕкленет.

**МĂН АМА:**

Пĕччен – пĕр халăх халĕ эп!
Те чĕрĕ эп? Те вилĕ эп?..
Чĕрем таппи пур чух, тăшман,
Пуçра пĕртен-пĕр шухăш ман.

Мăн Ама ал тымарне çыртса татать те юнне мăнукĕ çине сирпĕтме пуçлать.

МĂН АМА:

Тăран! Тăван юнпа шăварăн!
Асаннӳне те палламарăн...

Эп çĕнтерӳçĕ пек вилетĕп...
Тӳпе! Таса, сăваплă эпĕ...

Мăн Ама вăйран кайса ӳкет. Вилет. Туймăрса лаххан-ри шыва хăй тăрăх ярса юнран тасаласшăн. Элпану кĕрет.

ЭЛПАНУ:

Эс кам? Этем-и эс?! Эсрел-и эс?!

ТУЙМĂРСА:

Хĕвелĕм! Элпану!..
Епле çиллес...
Сана илме килсеттĕм эпĕ.
Чун-чĕререн – чыспа хисепĕм!

ЭЛПАНУ:

Элчел-им эс мана илме килме?
Санпа кайман, каймастăп та, мемме!

ТУЙМĂРСА:

Каяр, каяр, ытла ан курнăç,
Унта çăтмах пек манăн пурнăç!

ЭЛПАНУ:

Ман пурнăçăм – кунта та тамăк,
Лери çăтмах пушшех те кирлĕ мар!
Сăваплăн çунчĕ ăшăмри кăвар,

Тинех ăна йăх-ях кĕртсе таптамăп!
Вĕлер мана – эп сан чунна кăларăп:
Леш тĕнчене пĕрех пĕртен-пĕр алăк.

**ТУЙМĂРСА:**

Çук, Элпану, вилме ухмах-им эпĕ?
Халь вăй питти! Хĕрсем тĕк пек ачаш!
Эс пур, айван: «чăваш, чăваш, чăваш...»
Хăсас килет!

*(Кăкăрне çапса)*

Ак кам чăваш тĕрекĕ!

**ЭЛПАНУ:**

Эй, мĕскĕн çын! Арçын татки!
Çуланчăк тилĕ ăратти!
Йăхран тарса ыр ят тăваймăн!
Йăхна сутса телей кураймăн!

Туймăрсан пуçне касса татать. Анчах вăл Элпанăва чиксе ĕлкĕрет. Иккĕшĕ те тĕшĕрĕлсе анаççĕ.

## *Вун иккĕмĕш курăну*

Шелепи тухать. Юрлать.

Эп Улăп йăхĕнчен пил илнĕ
Вутра – хĕрме, шывра – çунма,
Çут тĕнчене савмашкăн килнĕ
Чăваш ятпа, йăваш чунпа.

Ҫӗр чӗлхине пӗлсен – кун тулӑх,
Ӗҫре куратӑп пархатар.
Эй, ҫут ҫанталӑк! – Ҫураҫулӑх!
Хӑв кӗввӳнтен тухма ан пар.

Вара хӗвелӗм те – ман майлӑ,
Сӳнес пек уйӑх та – тулать!
Вутра хӗрсе шывра ҫунмалӑх
Ман халӑх вилӗмсӗр пулать.

Арҫын ачапа хӗр ача, йӗкӗрешсем, «анне!» тесе чупса тухаҫҫӗ, амӑшне пырса ҫупӑрлаҫҫӗ.

Эй, ҫӑлтӑр ҫумӑрӗ! Хӑватӑр
Сукмак пулса ӳкет ҫӗре...
Пӗтме пӳрмен чӗлхем калатӑр:
«Хӗвел ман ҫӑлтӑр – тӳпере!»

Яш-кӗрӗм карталанса тухать. Шелепипе ачисем варрине юлаҫҫӗ.

Чӑваш вӑййи – тӗнче ҫаври-тӗр,
Хӗвеле май, уйӑха май.
Пин ҫуллӑхсен пушарӗ витӗр
Умра куратӑп йӑхӑма!

Чаршав

*Кĕнекене кăларма пулăшнăшăн тав тăватăп:*

*Николай Ванеркина,*
«Моргаушская» чăх-чĕп фабрики»
уçă акционерлă общество директорне;

*Дмитрий Круглова,*
«Букет Чувашии»
уçă акционерлă общество директорне;

*Николай Каргина,*
Социализмла Ĕç Геройне;

*Наталия Кирилловăна,*
предпринимателе.

**Карягина Марина Федоровна**

# КĔМĔЛ ТУМЛĂ ÇАР

# СЕРЕБРЯНОЕ ВОЙСКО

Трагедия в стихах

*На чувашском языке*


Компьютерная вёрстка *Р.А. Димитриевой*
Художник *Н.М. Балтаев*
Дизайн обложки *Е.В. Карповой*
Фото *А.П. Степанова*

Подписано к печати 28.08.2012
Формат 70х100/32. Гарнитура Arial Cyr Chuv
Бумага офсетная. Печать офсетная.
Тираж 1000 экз. Физ. печ. л. 2,625. Заказ № К-247.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98. E-mail: newtime1@mail.ru

100.00



Марина Карягина — РФ Писательсен союзĕн членĕ. Хальччен унăн вун ултă кĕнеке пичетленсе тухнă. Çыравçăн «Кĕмĕл тумлă çар» сăвăлла трагедине 2010 çулта Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш Патшалăх çамрăксен театрĕ сцена çине кăларнă (режиссерĕ — Станислав Васильев). Автор хайлавшăн республикăри «Чĕнтĕрлĕ чаршав» конкурсра «Çулталăкри чи лайăх драматург» ята тивĕçнĕ (2011 ç.). «Кĕмĕл тумлă çар» спектакль кĕске хушăра Раççей тата тĕнче шайĕнчи чылай фестивальте хутшăннă, Турци («Конья»), Саранск («Йăх çурти»), Хусан («Науруз»), Уфа («Туганлык»).